К74.268.11
А65
Ч-43644

Е.А. Андреева, П.Н. Метин, В.И. Игнатьева

# Чăваш чĕлхипе литератури

## Олимпиада ыйтăвĕсем

Национальная библиотека ЧР
4-043644

Обязат экз.
К 74.268.11
А 65

Е. А. Андреева, П. Н. Метин, В. И. Игнатьева

# Чăваш чĕлхипе литератури

## Олимпиада ыйтăвĕсем

Вĕренӳпе меслетлĕх пособийĕ

Шупашкар 2010

УДК 373.167.1:811.512.111 (075.3)
ББК 74.261.4я72
А 655

*Чăваш Республикин Вĕренӳ тата*
*çамрăксен политикин министерстви*
*уйă курма ирĕк панă*

Рецензентсем:

***Ю. М. Виноградов*** – филологи ăслăлăхĕсен кандидачĕ, Чăваш республикин вĕренӳ институчĕн чăваш чĕлхипе литератури кафедрин ертӳçи;

***О. В. Скворцова*** – филологи ăслăлăхĕсен кандидачĕ, И.Я. Яковлев ячĕллĕ чăваш патшалăх педагогика университечĕн чăваш литератури кафедрин доценчĕ;

***Е. В. Иванова*** – Мăн Сĕнтĕр шкулĕнчи чăваш чĕлхипе литературине вĕрентекен.

**Андреева, Е. А.**

Чăваш чĕлхипе литератури. Олимпиада ыйтăвĕсем : вĕренӳпе меслетлĕх пособийĕ / Е. А. Андреева, П. Н. Метин, В. И. Игнатьева. – Шупашкар : И. Я. Яковлев ячĕллĕ Чăваш патшалăх педагогика университечĕ. – 105 с.

© Андреева Е. А., Метин П. Н.,
Игнатьева В. И., 2010
© И. Я. Яковлев ячĕллĕ Чăваш
патшалăх педагогика университечĕ, 2010

И-43644
НАЦИОНАЛ... ...ТЕКА

## УМĔН КАЛАНИ

Класс тулашĕнче тумалли чи пысăк, çав вăхăтрах кăткăс ĕçсенчен пĕри вăл – чăваш чĕлхипе тата литературипе олимпиада ирттересси. *Олимпиада* ăнлав авалах çуралнă. Грексен мифологийĕнче каланă тăрăх, тахçан авал Олимп тăвĕсем çинче турăсем йышлă пурăннă. Унта çав турăсен патшин, Зевсăн, пысăк кермен те пулнă тет. Зевс ячĕпе Олимп тăвĕсем çинче тăватă çулта пĕрре ал-ура вăйне кăтартакан спорт ăмăртăвне ирттернĕ. Пĕрремĕш Олимп вăййи пирĕн эрăчченхи 776 çултах пулса иртнĕ теççĕ. Курма пухăннă халăх атлетсен пултарулăхне курса тĕлĕннĕ, савăннă, мăнаçланнă. «Çĕнтерÿçĕсене мухтав!» – тесе кăшкăрнă. Аслă судья вара ăмăртура çĕнтерсе мала тухнă пултаруллă атлета олив йывăçĕн çулçинчен çыхнă пуç кăшăлĕ тăхăнтартса чыс тунă.

Пирĕн эрăччен пуçланнă çак спорт ăмăртăвĕн йĕрки çĕр çинчи пур халăхсен ырă йăли пулса тăчĕ, традицие кĕчĕ. Халь тĕнчери спорт ăмăртăвне çулла та, хĕлле те ирттереççĕ. Ку кăна та мар. *Олимпиада* сăмах паянхи кун чылай анлă пĕлтерĕшлĕ пулса тăчĕ. Ялсемпе хулари шкулсенче, районсенче, республикăри тĕрлĕ йышши вĕренÿ заведенийĕсенче пĕр-пĕр предмета: физикăна, математикăна, химие, çав шутрах чăваш чĕлхипе литературине те лайăх пĕлнине тĕрĕслес тĕллевпе олимпиадăсем ирттереççĕ. Кунта вĕренÿри хастар ачасем пĕлÿ шайĕ енĕпе ăмăртаççĕ, «вăй виçеççĕ».

Олимпиада ăмăртăвĕсем, пĕр енчен, учитель ĕçне курăмлă тума, тепĕр енчен, вĕренекенсен нумайрах пĕлес туйăмне çĕклеме, тавра курăмне аталантарма, пĕлÿ шайне пĕтĕмлетме май параççĕ.

Тăван чĕлхепе литературăна ача мĕнле шайра пĕлнине учитель питĕ аван туять. Кулленхи йывăр та кăткăс ĕçре çакă та тÿрех палăрать. Учитель ачасене сăмахпа калаттарать, тĕрлĕ çыру ĕçĕсем (изложени, сочинени, диктант) çыртарать, вĕсем пĕр-пĕр хăнăху ĕçĕ тума пултарнине пилĕк баллă системăпа хаклать. Олимпиадăра вара пĕлÿ кăна мар, тавçăрулăхпа пулта-

рулăх та кирлĕ. Олимпиада пуриншĕн те чи пысăк ăмăрту-вăйă, чи хаваслă уяв!

ХАТĔРЛЕНӰ ТАПХĂРĔ. Олимпиадăна тĕплĕн хатĕрленсе ирттерсси вĕрентекеншĕн, çавăн пекех ку енĕпе йĕркеленĕ ĕç комитечĕшĕн чи яваплă тапхăр шутланать. Олимпиадăна пĕр класра, классем хушшинче, шкулта ирттерме пулать. Çак йĕрке теорипе хăнăху енчен лайăх хатĕрленнĕ ачасене тупса палăртма пулăшать, кашнинпех уйрăммăн ĕçлеме хистет.

Район шайĕнчи олимпиада – тепĕр яваплă тапхăр, мĕншĕн тесен шкул çĕнтерӳçи, чăн-чăн олимпиец, хальхинче хăйĕн пĕлĕвĕсĕр пуçне учитель тăрăшулăхне, коллектив ячĕпе чысне хӳтĕлет. Çакă хăйне евĕрлĕ пĕтĕмлетӳллĕ, кăтартуллă ĕç пулса тăрать.

Чăваш Республикин Вĕренӳ тата çамрăксен политикин министерстви çулсеренех районсенче чăваш чĕлхипе литератури олимпиадинче çĕнтерӳçĕ ятне илме тивĕç пулнă ачасем хушшинче республикăри тата регионсенчи пĕтĕм чăваш ачисен олимпиадине ирттерет. Олимпиадăн виççĕмĕш тапхăрне хăçан тата мĕнле йĕркепе ирттерессине министр хушăвĕпе килĕшӳллĕн палăртаççĕ. Çапла вара, чăваш чĕлхипе литератури олимпиадине хутшăнса «вăй виçесси» кашни ачашăн, вĕрентекеншĕн, районшăн ахаль вăйă кăна мар, чыслă та яваплă ĕç пулса тăрать.

Олимпиадăна хăçан ирттересси учителĕн вĕрентӳпе воспитани планĕнче паллă пулмалла. Çакă шкулăн е районăн вĕрентӳпе воспитани планĕпе килĕшсе тăмалла. Мĕншĕн тесен ачасене тăван чĕлхепе, литературăпа кăсăклантарасси, ăна хисеплеме, юратма вĕрентесси хатĕрленӰ тапхăрĕнчен нумай килет. Хăшĕсем ăна вĕренӰ çулĕ вĕçĕнче, теприсем чăваш чĕлхипе литератури эрнинче е чăваш çырулăхĕн кунне уявланă чухне ирттереççĕ. Юлашки çулсенче регионсем шайĕнчи олимпиадăна ытларах нарăс (февраль) уйăхĕнче тăваççĕ. Çавна май шкулсемпе районсенчи ăмăртусене кăштах маларах, чӳк (ноябрь) – раштав (декабрь) уйăхĕсенче ирттерни вырăнлă.

ХУШУ (ПРИКАЗ) КĂЛАРНИ. Шкулти, районти е республикăри чăваш чĕлхипе литература олимпиадине

лайӑх ирттерес тесен палӑртнӑ ӗҫе малтан пуҫласа вӗҫне ҫитиччен ҫирӗп пӑхӑнса, пурнӑҫласа пымалла. Вӗренӳ заведенийӗсенче: шкулта, колледжра е лицейра олимпиада ирттерме вӑхӑт ҫитес умӗн администрацин ятарлӑ хушу (приказ) кӑларни вырӑнлӑ. Ҫав хушӑвӑн пӗлтерӗшӗ пысӑк. Вӑл ӗҫ хучӗсен тӗп пайӗ, докуменчӗ. Кунта хушу кӑларакан (шкул директорӗ, районти вӗрентӳ пайӗн ертӳҫи, министр) олимпиадӑна хӑҫан, ӑҫта, мӗнле тӗллевпе ирттернине кӗскен те уҫӑмлӑн палӑртать.

СМЕТА (УКҪА ТЕНКӖ ТӐКАКЛАС ЙӖРКЕ) ҪИРӖПЛЕТНИ. Хушупа килӗшӳллӗн йӗркелӳ комиссийӗ шкул директорне олимпиада сметине туса парсан аван. Ҫӗнтерӳҫӗсен шутне кура миҫе хисеп хучӗ (грамота), диплом, парне илме палӑртни е вӗсен хакне малтанах шутласа хуни шкул директорӗпе тата бухгалтерипе калаҫса татӑлма ҫӑмӑллӑх кӳрет. Олимпиада пуласси ҫинчен пӗлтернӗ хут, тӗрлӗ тӗслӗ краска т.ыт. хатӗрсем кирли ҫинчен те манмалла мар.

ОЛИМПИАДА ЫЙТӐВӖСЕМПЕ ХУРАВӖСЕНЕ ХАТӖРЛЕССИ. Акӑ ӗнтӗ сирӗн хушу пур, смета та хатӗр. Халӗ тӳреммӗнех олимпиадӑна йӗркелесе ирттерес ӗҫ планне тума, ыйтусене хатӗрлеме пуҫӑнмалла. Олимпиада ыйтӑвӗсемпе ӗҫӗсен шутне, кӑткӑслӑхне палӑртнӑ чухне вӗсене хӑш класс валли хатӗрленине шута илмелле. Вӗсем ытла йывӑр та, ҫӑмӑл та ан пулччӑр. Вӑтам класри (VI-VIII) ачасем валли хатӗрленӗ чухне кӑсӑклӑ, вӑйӑ формине ҫывӑх ыйтусем пулсан аван. IX-XI классем валли вара чылай йывӑртарах ыйтусем пама пулать. Сӑмахран, чӑваш литература терминӗсен пӗлтерӗшӗсене ӑнлантарасси, илемлӗ литературӑн сӑнарлӑх мелӗсене тупса палӑртасси, писательсемпе поэтсен псевдонимӗсемпе вӗсен пултарулӑх ҫул-йӗрне пӗлесси. Ҫавӑн пекех, ӑмӑртӑва хутшӑнакансене пӗр-пӗр кинофильма е кӗнекене хакласа рецензи ҫыртарма, картинӑн сӑнарлӑ енӗсене сӑнласа партарма, тӗрлӗ ӗҫ хучӗсем ҫыртарма юрать. Литература кроссворчӗсемпе, ребуссемпе усӑ курни те вырӑнлӑ. Фразеологизмсене ӑнлантарса пама ыйтни, пӗр чӗлхерен тепӗр чӗлхене куҫарни, текстри йӑнӑшсене тӳрлетни те кӑсӑклӑ. Урӑхла каласан, аслӑрах классенче 5-9 классенче

вĕреннĕ е программăра палăртман материал та пулма пултарать.

ОЛИМПИАДĂНА ЙЫХРАВЛАНИ. Шкулта чăваш чĕлхипе литератури олимпиади хăш вăхăтра пулассине ачасене чылай маларах пĕлтерсе хумалла. Ăна официаллă стильпе е шӳтлĕ, ытарлă стильпе курăмлă пĕлтерӳ çапса йыхравлама пулать. Сăмахран: «Эй! Маттурсем! Эй! Харсăрсем! Олимп тăвĕ çине хăпарса чăваш чĕлхи уявне иртерер-и? ...» Ăçта, хăçан, хăш вăхăтра пулнине илĕртӳллĕ пĕлтерни уяв пĕлтерĕшне ӳстерет. Классенче олимпиада ыйтăвĕсем мĕнлерех пулассине астутарни, вуласа пĕлмелли литература сĕнни те ытлашши пулмĕ. Çакă ачасем хушшинчи ăмăртăва çивĕчлетме, чĕлхепе литература вăрттăнлăхĕсене тĕплĕнрех тишкерме пулăшать. Çапла вара, чăваш чĕлхипе литература олимпиади сирĕн шкул пурнăçĕнче йăлана кĕнĕ чи пысăк уяв-ăмăрту, чăн-чăн пĕлӳ кунĕ пулса тăрĕ.

ЕÇЛĔ ТАПХĂР. Ачасен олимпиада хуравĕсене пĕтĕмлетнине курăмлă туни ăмăрту çивĕчлĕхне ӳстерет. Ăмăртакансен балне сăмахпа каласа пĕлтерни лайăх, анчах çак балсен хушăвĕ куç умĕнче курăмлă пулсан татах та аван. Ăна пысăк хут листи е класри доска çинче туса пыма пулать.

| Класс / Конкурс | 5 | 6 | 7 | 8 | 9 | 10 | 11 |
|---|---|---|---|---|---|---|---|
| 1.<br>2.<br>3. | | | | | | | |

ОЛИМПИАДĂНА ВĔÇЛЕНИ. Чăваш чĕлхипе литература олимпиадине чыслă, чаплă, хаваслă вĕçлеме тăрăшмалла. Вăл пуриншĕн те савăнăçлă та хумханулă, нумайлăха асра юлмалли самант пултăр. Çавăнпа та олимпиада вĕçне те, пуçламăшĕ пекех, малтанах палăртса, планласа хумалла (çĕнтерӳçĕсене мĕн памалла, мĕнле кĕвĕ ярса илемлетмелле, хавхалантару саманчĕ мĕнле иртмелле т.ыт.те).

Уйрăм çĕнтерӳçĕсене е ушкăна палăртасси – яланах чи яваплă та сумлă ĕçсенчен пĕри. Ăмăрту çĕнтерӳçине анлă тавра курăмлă, тарăн та çирĕп пĕлӳллĕ, тавçăруллă вĕренекене палăртнă чухне вăл тăван чĕлхепе литература ыйтăвĕсене тĕрĕс хуравланисĕр пуçне тĕрĕс çырнине, калаçнине те шута илмелле. Пĕр-пĕр класс, шкул, район чысĕшĕн ушкăнпа ăмăртаççĕ пулсан – балсене хушса пĕр пĕтĕмлетӳ туни йышлăх туйăмне, яваплăха ӳстерет, туслăха çирĕплетет.

Ачасем хушшинче кӳренӳ е иккĕленӳ ан пултăр тесен олимпиада ирттернĕ хыççăн пĕтĕмлетӳсене таблицăра е ятарлă хушура пĕтĕмлетсе кăтартмалла. Тĕслĕхрен:

| Класс | Пухнă балл | Йышăннă вырăн |
| --- | --- | --- |
| V | 50 | 1 |
| VI | 48 | 2 |
| VII | 45 | 3 |

ÇĔНТЕРӲÇĔСЕНЕ ЧЫСЛАНИ. Олимпиада ирттернĕ хыççăн унăн кăтартăвĕсене пĕтĕмлетмелле, çĕнтерӳçĕсене хисеп хучĕ, диплом е парне парса чыс тумалла. Çĕнтерӳçĕсене жюри ертӳçи чыслани вырăнлă. Ку вăл тăван чĕлхепе литературăна вĕрентекен, шкул директорĕ е унăн çумĕ, е пĕр-пĕр литература персонажĕ пулма пултарать. Чысланă чухне музыка ярсан, залра ларакансем хавхаланса алă çупсан çак самант нумайлăха асра юлма пултарать. Пĕчĕк кăна хор мухтав юрри юрласан татах та хăйне евĕрлĕ пулĕ. Уйрăм çĕнтерӳçĕсене, малтан палăртнă пекех, хисеп хучĕ, диплом, кĕнеке парса чыс тумалла. Çĕнтерӳçĕ ушкăна класра е урокра ушкăнпа усă курмалли парнесем парсан аван. Сăмахран, пĕчĕк библиотека, кассета, альбом т.ыт.те. Хисеп хутне магазинран иличчен шкулта ятарласа илемлетме пулать. Çакă ачасемшĕн кăсăклă парне пулĕ. Енчен те вĕренекен районти тата республикăри олимпиадăра 1-3 вырăнсене тухрĕ е çав ăмăртусенчех нумай балл пухса палăрчĕ пулсан ăна тата унăн вĕрентекенне шкул директорĕ ятарлă хушу кăларсах тав сăмахĕ калама, парне е преми пама, аттестаци вă-

хӑтӗнче шута илме, ҫавӑн пекех ытти хавхалантару формисемпе усӑ курма тивӗҫлӗ. Хисепӗ те, чысӗ те, чапӗ те ҫӗнтерӳ шайӗпе килӗшсе тӑмалла.

Чӑваш чӗлхипе тата литературипе олимпиада ирттерме сӗнекен ыйтусене грамматика е литература пӗлӗвӗсен пайӗсене тӗпе хурса уйӑрни вырӑнлӑрах. Ҫакӑ вӗрентекенсене е йӗркелӳ комитетне кашни пайранах олимпиадӑн тӗрлӗ тапхӑрӗсем валли кӑсӑклӑ тата тивӗҫлӗ ыйтусем суйласа илме май парӗ. Ӑнӑҫу сунатпӑр сире, чӑваш чӗлхипе литературине юратакан олимпиецсем!

# ОЛИМПИАДА ЫЙТĂВĚСЕМ

## I . Чăваш чĕлхи (чăваш шкулĕсем)

### 1.1. Пĕтĕмĕшле ыйтусем

1. Чăваш чĕлхипе хурăнташлă чĕлхесен ячĕсене çырса илĕр: *çармăс, тутар, ирçе, пушкăрт, нухай, узбек, финн, мăкшă, вырăс, туркмен, азербайджан, грузин, каракалпак, алтай, кăркăс, турккă.*

2. «Тезаврус лингве чувашорум» («Чăваш сăмахĕсен кĕнеки») ĕçе кам çырнă? Хăш çулсенче пичетленнĕ вăл?

3. Чăваш чĕлхи хăш чĕлхесен ушкăнне кĕрет?

4. Хальхи вăхăтри паллă чăваш чĕлхеçисене каласа тухăр.

5. Кам вăл Н.И.Золотницкий? Унăн паллă кĕнекисем.

Н.И. Золотницкий вĕренекенĕсене тата унăн ĕçне малалла тăсаканĕсене (5-рен кая мар) каласа тухăр.

6. Чи малтан чăваш сăмахĕсене кам тата миçемĕш çулта тĕнче умне кăларнă?

7. Чăваш чĕлхин пĕрремĕш грамматики мĕн ятлă? Ăна кам çырса хатĕрленĕ? Кĕнеке ăçта тата миçемĕш çулта пичетленсе тухнă?

8. Чăваш чĕлхин иккĕмĕш грамматики мĕн ятлă? Ăна кам çырса хатĕрленĕ? Кĕнеке ăçта тата миçемĕш çулта пичетленсе тухнă?

### 1.2. Фонетика. Графика. Орфографи. Лексикографи

1. Çак сăмахсене камăнлăх формин 3-мĕш сăпатĕнче пĕрреллĕ хисепре çырăр: *мăрье, пуху, туя, повесть, хăю, чие, жюри, тĕвĕ.*

2. Кирлĕ çĕрте точкăсем вырăнне **ь** палли лартса çырăр: *çул...çă, кун...ча, имен...чĕк, кĕс...е, мăкăн..рен, медал...шĕн, писател...сен, роял...пе, сĕтел...ри, выл...ăх, пыл...чăк, кукăл...сем, тетрад...рен.*

3. Панă сăмахсенче мĕншĕн икĕ пĕр пек хупă сас палли çырнине ăнлантарăр: *такка, вăййи, кăмăллăн, сасса, вĕренесси, килеттĕм, кайччăр, пĕличчен, ĕçлеттер, каймассерен, пĕрре, виççĕшĕ.*

4. Сăмахсенчи хупă сасăсем мĕншĕн çемçен е хыттăн илтĕннине ăнлантарăр: *пулăм – пÿлĕм, ăмăр – ĕмĕр, кăмăл – кĕмĕл, вăран – вĕрен, тылă – тилĕ, пыл – пил, тупа – тÿпе, ан – ен.*

5. Чăваш алфавитĕнче миçе сас палли? Уçă тата хупă сас паллисен шутне тата йышне кăтартăр.

6. Уçă сасăсен килĕшĕвĕ (сингармонизм) тесе мĕне калаççĕ?

7. Чăваш литература чĕлхинче сасăсене миçе ушкăна уйăраççĕ?

8. Чăваш чĕлхинче икĕ уçă сасă юнашар тăма пултарать-и?

9. Хальхи чăваш чĕлхинчи ялан янăравлă хупă сасăсене калăр?

10. Икĕ уçă сасă хушшинче тата ялан янăравлă хупă сасăпа уçă сасă хушшинче шавлă хупă сасă мĕнле илтĕнет? Тĕслĕхсемпе çирĕплетĕр.

11. Ассимиляци тесе мĕне калаççĕ? Тĕслĕхсемпе çирĕплетĕр.

12. Чăваш чĕлхинчи сасăсене тĕпчекен паллă ученайсенчен камсене пĕлетĕр?

13. Чăваш чĕлхинче сыпăк тĕвви мĕнрен килет?

14. Чăваш чĕлхин пĕрремĕш орфографи словарĕн авторĕ кам пулать?

15. Сăмах вĕçне пăхса йĕркеленĕ словарь тĕсне калăр.

16. Чи пирвайхи чăвашла-вырăсла словарь авторĕ кам?

17. Чăваш сăмахĕнчи уçă сасăсен килĕшĕвне пăсакан мĕнле аффикссене пĕлетĕр? Тĕслĕхсемпе ăнлантарăр.

18. Сас паллисен йĕркине мĕн теççĕ?

19. Фонетика тесе мĕне калаççĕ?

20. Лексикографи тесе мĕне калаççĕ?

21. Графика тесе мĕне калаççĕ?

22. Орфографи тесе мĕне калаççĕ?

### 1.3. Лексикологи. Фразеологи. Стилистика

1. Каларăшсене çырса пĕтерĕр: *«Мĕн акатăн, ...», «Çыншăн шăтăк ан алт, ...», «Ут пур чух çула çӳре, ...», «Пĕри ака-сухара, ...», «Çăла ан сур, ...», «Ватти çук, ...».*

2. Пĕрлĕхре вăй пулни çинчен калакан 10 каларăш тупăр.

3. Каларăшсемпе çунатлă сăмахсене вĕçлĕр:
*Ĕмĕр пурăн, ... . Чĕлхӳпе калаçма ан васка, ... . Кĕнеке те пулĕ ... . Утне çитмен ... . Анчах вăйлă этем те ... . Юр çинче кăмпа ... .*

4. Ваттисен сăмахĕсене вĕçлĕр:
*а) Кăмпа пултăр – ... ă) Сăмах çăмах мар, ... б) Шанчăклă тус – ... в) Ăшă сăмах – çу кунĕ, сивĕ сăмах – ... г) Паттăрăн пуç выртнă, таркăнăн ... д) Лаша тăват уралла, ... е) Пуçтарма – çулталăк, салатма – ... ё) Мулкачăн хăлхи вăрăм та – ... .*

5. Каларăшсемпе ваттисен сăмахĕсенчи сиктерсе хăварнă сăмахсене тупăр:

*а) ... рен хакли çук; ă) ...па курăн, алпа тытаймăн; б) Нимсĕр ... те пиçместь; в) Ĕçлемесĕр ... тăранмасть; г) Ӳркенмен ... пулнă; д) Вăтанман ... пулнă; е) Чĕлхе ... мар.*

6. Фразеологизмсен синонимĕсене тупăр:

*а) сехре хăпать – ... ă) кайăк вĕçсе каçаймасть – ... б) хырăм хыр тăрне хăпарчĕ – ... в) пуçа каçăрт – ... г) чĕлхӳне çырт – ... .*

7. Кăтартнă сăмахсемпе синонимлă фразеологизмсене тупăр:

*а) кĕлмĕçлен – ... ă) суй – ... б) хуçалан – ... в) нушалан – ... г) усаллан – ... д) вил – ... е) хĕне – ... .*

8. Фразеологизмсемпе синонимлă пулакан сăмахсене тупăр:

*а) уй тăмани – ... ă) шыв пулли – ... б) хĕрлĕ автан – ... в) вăрăм чĕлхе – ... г) лĕпĕрти кушак – ... д) çанă таварса – ... е) куçа чарса – ... ё) чĕрне хури пысăкăш – ... ĕ) шыв сыпнă пек – ...*

9. Каларăшсен синоним речĕсене малалла тăсăр:

*а) Ыр вăрлăхран ыр çимĕç – ...; ă) Çăхан куçне çăхан сăхмасть – ...; б) Вĕрмен йытă вăрттăн çыртать – ...; в) Алла алă çăвать – ...; г) Ăсмассерен турам лекместь – ...; д) Вут сӳнсен шыв нумай – ....*

10. Точкăсем вырăнне скобкăри сăмахсенчен кирлине суйласа илсе çырăр.

*Павăл çамки çине тапса тухнă ... (мăнă, пысăк, шултра, катмар) тумламлă тарне шăлса илчĕ те тенкел çине ларчĕ.*

11. Ваттисен сăмахĕсене çырса пĕтерĕр:

*а) Паян тумалли ĕçе ...; ă) Ватă çын ...; б) Ĕçсĕр лариччен ...; в) Çын аллинчи кукăль ...; г) Ик мулкача хăвалакан ...; д) Сивĕ яшка сивĕтмест, ...; е) Кая юлсан ...; ё) Çапа пĕлмен пушă ...; ĕ) Кашкăртан тарнă ... .*

12. Фразеологизмсен пĕлтерĕшне пĕр сăмахпа ăнлантарăр: *а) сехре хăпрĕ; ă) тӳрĕ пилĕк; б) хăлхана чик; в) хуп турттар; г) ик айкки те тăвайкки; д) чике тăршшĕ ларт; е) тăм писмен; ĕ) чĕрре кĕр; ё) кĕске турта; ж) тип мунча кĕрт.*

13. Панă сăмах майлашăвĕсенчен литература чĕлхинче çирĕпленнисене çырса илĕр: *упа çури – упа чĕппи (медвежонок), чана çури – чана чĕппи (галчонок), слон çури – слон пăрушĕ (слоненок), качака çури – качака путекки (козленок), шăши çури – шăши чĕппи (мышонок), сысна çури – сысна чĕппи (поросенок).*

14. Çак фразеологизмсен синонимĕсене тупăр, сăмах çаврăнăшĕсене ăнлантарăр:

| | |
|---|---|
| *Пуш параппан çап* | *Харама кайрĕ* |
| *Элек пар* | *Куршанак çыпăçнă* |
| *Ыйха çап* | *Кĕске турталлă* |
| *Шӳт ту* | *Ик айкки те тăвайкки* |
| *Шăпи тулчĕ* | *Чĕлхене çырт* |
| *Тăн пар* | *Тимĕр пăрçа* |
| *Чыс ту* | *Ухмаха ер* |
| *Чухăна ер* | *Халтан кай* |

15. Çак фразеологизмсем мĕнле мелпе пулнине ăнлантарăр. Вĕсемпе усă курса предложенисем тăвăр.

| | |
|---|---|
| *Патак çи* | *Пĕр чĕптĕм те* |
| *Çĕр тĕпне анса кай* | *Юпа пек* |
| *Нӳхреп куç* | *Нар пек* |
| *Чĕрне хури тĕшне* | *Чĕкеç чĕлхеллĕ çын* |

16. Çак строфари илемлĕх мелĕсене кăтартăр. Шухăш сăнарлăхне вăйлатакан фразеологизма палăртăр:

*Ăс-пуçран та катăк мар,*
*Чун хавалĕпе те паттăр.*
*Чĕрепе те шĕл-кăвар –*
*Эпир пулнă, пур, пулатпăр!* (П. Хусанкай.)

17. Фразеологизмсемпе синонимлă пулакан сăмахсене тупса çырăр.

*1. Чике тăршшĕ ларт – ... . 2. Шăртна тăрат – ... . 3. Çанă таварса – ... . 4. Шыв пулли – ... . 5. Уй тăмани – ... . 6. Чĕрне хури пысăкăш – ... . 7. Шыв сыпнă пек – ... . 8. Пуçа касăрт – ... . 9. Хутаçпа çÿре - ... .*

18. Каларăшсен синоним речĕсене малалла тăсăр. (Кашни каларăш çумне 2-рен кая мар хушса çырмалла.)

*1. Улми улмуççинчен аякка ÿкмест– ... . 2. Кĕске пушă хытă çапать – ... 3. Кашни кун мăнкун мар – ... . 4. Çĕлен çĕлене çимест – ... .*

19. Фразеологизмсемпе синонимлă пулакан сăмахсене тупса çырăр.

*1. Куç хупса иличчен – ... . 2. Шăртна тăрат – ... . 3. Вăй хурса – ... . 4. Шыв пулли – ... . 5. Уй тăмани – ... . 6. Чĕрне хури пысăкăш – ... . 7. Шыв сыпнă пек – ... . 8. Пуш параппан çап – ... .*

20. Фразеологизмсемпе синонимлă пулакан сăмахсене тупса çырăр.

*1. Пуç тÿпи питĕрĕнмен – ... . 2. Пăрçа пиçмест – ... . 3. Çанă таварса – ... . 4. Шыв пулли _ ... . 5. Пуçа çĕмĕр – ... . 6. Хура курак шуралсан – ... . 7. Пăкки тухса ÿкнĕ – ... . 8. Сăмсана касăрт – ... .*

21. Панă фразеологизмсем çумне çывăх пĕлтерĕшлĕ (синонимлă) фразеологизмсем тупса çырăр.

*1. Ури çине ĕне пусман. – ... 2. Пĕр чĕлхе туп. – ... 3. Чике тăршшĕ ларт. –... 4. Хĕвел кăмака хысĕнчен тухсан – ... 5. Пиçмен пашалу – ... .*

22. Ваттисен сăмахĕсене вĕçлĕр.

*1. Çурт лартма йывăр мар, ... . 2. Ху лайăх та – сын та лайăх, ... . 3. Çын ĕçпе ватăлмасть, ... . 4. Кив пÿрте пăсиччен ... . 5. Кĕрхи калчана ... . 6. Алă тивменни ... . 7. Пĕр çын пăснине ....*

23. Ваттисен сăмахĕсене вĕçлĕр.

*1. Тăшман йăпăлтатса хур тăвать, ... . 2. Усал сăмах утпа çӳрет, ... . 4. Пуян вилет – мул юлать, ... . 5. Вут хумасăр ... . 6. Çĕрте малта пыр, ... . 7. Ĕнсе хыçнипе ... .*

24. Ваттисен сăмахĕсене вĕçлĕр.

*1. Сивĕ яшка сивĕтмест, ... . 2. Çавра çăмартан кĕтесси çук, ... 3. Калакан маннă, ... . 4. Икĕ мулкача хăвалакан ... . 5. Кахалшăн çĕр кĕске, ... 6. Ӳркев ӳкерет, ... . 7. Ир тăракан çырла çинĕ, ... .*

25. Предложенире йăнăш тупăр та тӳрлетĕр, тĕрĕссипе мĕнле каламаллине (çырмаллине) ăнлантарăр.

*Ачасем пуçарнă ырă ĕç ăнăçлă вĕçленессине шанатпăр.*

26. Пуплевĕн стиль тĕсĕсене палăртăр, çав стильсемпе ăçта усă курнине çырса парăр.

27. Тĕслĕхсенче пуплев йăнăшне тупăр.

*1). Пире вĕрентекен учительсем – пурте ырă кăмăллă çынсем.*

*2). Илемлĕх енчен ăста ӳкерчĕксем тума поэтикăллă чĕлхе мелĕсем пулăшаççĕ.*

*3). Йывăç кутне ӳссе ларнă çамрăк кăмпа зоотехникăн сулмаклă атти айне пулса лапчăнса çĕмĕрĕлчĕ.*

*4). Чăваш литературине юратса вулаççĕ пирĕн патăрта.*

*5). Статья пирки вулакансем хăйсен шухăш-кăмăлĕ пирки уççăн, ним пытармасăр пĕлтереççĕ.*

*6). Сан аннӳпе эпĕ Карл Маркс урамĕнче тĕл пултăм.*

*7). Кĕркунне пасарта арбузсем сутаççĕ.*

*8). Малтанхи сăмахсене каланă чухне каччă тутисем чĕтренсе илчĕç.*

*9). Радиопа паракан передачăсене, уйрăмах чăвашлисене, ман анне юратса итлет.*

*10). Колхоз председателĕ пирĕн шкула телевизор парса парнелерĕ.*

*11). Телевизорпа паракан передачăсене ачасем куллен савăнса пăхаççĕ.*

*12). Эпĕ аннене 60 çул тултарнă ятпа ăшă тутăр парса парнелерĕм.*

*13). Ман сан пата ыйту пур.*

*14). Мана ун чух редколлеги членĕ турĕç. Кайран редактором лартрĕç.*

28. Çак сăмахсен синонимĕсене тупса çырăр:

| | | |
|---|---|---|
| *Илемлĕ* | *Пысăк* | *Шавла* |
| *Ăру* | *Лаша* | *Çирĕп* |
| *Ерипен* | *Кахал* | |

29. Çак сăмахсен пĕлтерĕшĕсене ăнлантарăр:

*Ăраскал* *Ăсчах* *Пайта* *Юлан ут*

30. Синоним, антоним, омоним çинчен ăнлантарăр, 5-шер тĕслĕх тупăр.

31. Çак терминсене ушкăнлăр:

| | | |
|---|---|---|
| *Помидор* | *Орфографи* | *Сеялка* |
| *Пунктуаци* | *Кишĕр* | *Синекдоха* |
| *Комбайн* | *Рифма* | *Плуг* |
| *Кукуруза* | *Атăл* | *Ыраш* |
| *Ритм* | *Шупашкар* | *Кино* |
| *Поэма* | *Живопись* | *Сонет* |
| *Пихампар* | *Метафора* | *Киремет* |
| *Сăпатлантару* | *Тĕрленчĕк* | *Иван Мучи* |
| *Сантăр* | *Музыка* | *Çеçпĕл Мишши* |

32. Сăмах майлашăвĕсен ярăмне малалла тăсăр:

1) *Вăйă карти, шкул карти...*
2) *Çĕр шапи, çĕр çырли...*
3) *Чĕр тамăк, чĕр чун...*

33. Плотниксемпе столярсем анлă усă куракан терминсене çырăр.

34. Чĕлхе наукинче *«çыру лексики»* текен термин ăнлав пур. Çыру лексикин сăмахĕсене тата темиçе ушкăна уйăраççĕ. Çав ушкăнсене палăртăр, тĕслĕхсемпе çирĕплетĕр.

35. Мĕнле сăмахсемпе эпир сайра усă куратпăр? Мĕншĕн? Чĕлхе наукинче вĕсене мĕн теççĕ?

36. Чĕлхе наукинче неологизм тесе мĕне калаççĕ? Ăнлантарăр, тĕслĕхсемпе çирĕплетĕр.

37. Пĕр сăмахпах пĕтĕм япалине те, унăн пайне те пĕлтернине мĕн теççĕ?

38. Ятарлă лексика шутне мĕнле сăмахсем кĕреççĕ?

39. Текстăн темине тата стильне палăртăр.

Чăваш сăмахĕсенче хытăлăхпа çемçелĕх паллисене урăхларах лартмалла тунă. Ку таранччен чăваш сăмахĕсенче икĕ паллине те лартаттăмăр: *кĕсье, тухъя*, анчах *мăрье, Марье, Тарье*. Тĕрĕссипе, кун пек чухне ***ь*** çемçелĕхе кăтартмасть, ***ъ*** пекех, хыççăнхи усă сасă умĕн ***й*** çырмаллине асăрхаттарать. (И. Андреев.)

40. Кĕсел тыррине мĕн теççĕ?

41. Çак сăмах майлашăвĕсемпе палăртнă япаласен ячĕсене кĕскен мĕнле çырмалла: *аварлă мăн курка, типĕ курăк*?

42. Уйăх ячĕсене чăвашла йĕркипе çырса тухăр.

Ч-43644

43. *«Çăпата»* сăмахри сас паллисемпе усă курса çĕнĕ сăмахсем тăвăр.



Национальная библиотека
Чувашской
Республики

44. *«Ă»* камăнне пĕлсен кайăк ячĕ пулать.

45. Шывра пурăнакан мĕнле чĕр чун çине кăтартсан кайăк ячĕ пулать?

46. «Кĕрепенке», «кĕренке» сăмахсем мĕне пĕлтереççĕ? Пĕр пăт мĕн йывăрăш?

47. Мĕне лексикологи теççĕ?

## 1.4. Морфологи. Сăмах пулăвĕ

1. Тулли тата пулăшу пĕлтерĕшлĕ пуплев пайĕсем пĕрпĕринчен мĕнпе уйрăлса тăраççĕ?

2. Чăваш чĕлхинче миçе пуплев пайĕ? Пуплев пайĕсен ушкăнĕсене тата ячĕсене çырса парăр.

3. *«Алюмини»* сăмаха падежсем тăрăх вĕçлĕр.

4. *«Кăранташăмсемпе»* сăмаха морфологи тишкерĕвĕ тăвăр.

5. Мĕн вăл татăк? *-Мĕн; -çке; имĕш* татăксемпе усă курса предложенисем тăвăр.

6. Чĕлхе наукин пайĕсене çырса кăтартăр.

7. Глагол (ĕç-хĕл) наклоненийĕсене палăртăр. Вĕсем мĕне пĕлтернине ăнлантарăр, тĕслĕхсемпе çирĕплетĕр.

8. Паллă ячĕсен танлаштару степенĕ мĕнле пулать?

9. Иккĕмĕшле глаголсем мĕнле пулаççĕ? Тухăçлă аффикссемпе 3-шер тĕслĕх илсе çирĕплетĕр.

10. Мĕн вăл морфологи?

11. Чăваш чĕлхинче япала ячĕн камăнлăх форми миçе тĕслĕ пулать?

12. Хисеп ячĕсем пулăвĕ тата пĕлтерĕшĕ тăрăх мĕнле формăсенче пулаççĕ?

13. Глаголăн сăпатсăр формисем шутне мĕн-мĕн кĕрет?

14. Мĕн вăл наречи? Наречисем мĕнле ушкăнсене уйрăлаççĕ?

15. Евĕрлев сăмахĕсем предложенин мĕнле членĕсем пулаççĕ?

16. Çак предложенисенче глаголăн сăпатсăр формине палăртăр. Наклоненине, вăхăтне кăтартăр, предложенире мĕнле член пулнине калăр.

1) *Федор Иванович Салампи ашшĕпе пит туслă пурăннă, иккĕшĕ пĕрле вăрçа кайнă, вăрçăран таврăнсан ялта Совет влаçĕшĕн кĕрешнĕ.* (А. Артемьев.)

2) *Çиесси çăмăл та, ĕçлесси йывăр.* (Ват. сăмахĕ.)

3) *Ача пăхакан выçса вилмен, йытă пăхакан выçса вилнĕ.* (Ват. сăмахĕ.)

17. Морфологи тишкерĕвĕнчи йăнăша тупăр.

*Вăйлисемсĕр* – япала ячĕ, сăмах тĕпĕ - вăй, танлаштару форминче, пĕрреллĕ хисепре, пирке падежĕнче.

18. Морфологи тишкерĕвĕнчи йăнăша тупăр.

*Илемлисенчен* – япала ячĕ, сăмах тĕпĕ - илем, палăрту форминче, пĕрреллĕ хисепре, вырăн падежĕнче.

19. Панă сăмахсем çумне сăмах тăвакан аффикссем хушса иккĕмĕшле сăмахсем тăвăр (кашнинчен 10-шар сăмахран кая мар). Аффикссене пĕрин хыççăн теприне хушма юрать.

*Шан, çăмăл, вăй.*

20. Пулăвне кура сăмахсене икĕ ушкăна (пĕрремĕшле е иккĕмĕшле) уйăрса çырăр.

*Сунтăх, тутăх, куçăх, тунсăх, шурăх, турăх, пăрăх, кушăх, ăшăх, сарăх, япăх, тарăх, тулăх, хăнăх, пусăх, выçăх, пăчăх, йăшăх, урăх, сурăх.*

21. Пулăвне кура сăмахсене икĕ ушкăна (пĕрремĕшле е иккĕмĕшле) уйăрса çырăр.

*Парăм, хăрăм, курăм, тусăм, çулăм, сунăм, улăм, пулăм, пăрăм, çаврăм, йăрăм, вăрăм, тăсăм, пусăм, арăм, чăтăм, хулăм, туртăм, хуньăм, чунăм.*

22. Пулăвне кура сăмахсене икĕ ушкăна (пĕрремĕшле е иккĕмĕшле) уйăрса çырăр.

*Тăкак, калак, чăмлак, пуклак, куршанак, пăрлак, сукмак, ашак, пылак, пушмак, чăмăртак, кăвасак, тумлак, калпак, курак, шыçмак, чарак, патак, кăвак, сулмак.*

### 1.5. Синтаксис. Пунктуаци

1. Хутлă предложенири хутсăр предложенисен чиккине, предложенисенчи тĕп членсене тупăр. Хутсăр предложенисем мĕнле мелпе çыхăннине палăртăр та хутлă предложени тĕсне калăр.

*Ура айĕнче тем чăштăртатнине илтсе Васса пĕшкĕнчĕ те тĕмĕ ăшĕнче пытанса ларнă тăмана чĕппине курчĕ.* (Ю.Скворцов.)

2. Хутлă предложенири хутсăр предложенисен чиккине, предложенисенчи тĕп членсене тупăр. Хутсăр предложенисем мĕнле мелпе çыхăннине палăртăр та хутлă предложени тĕсне калăр.

*Тахăшĕн паттăр автанĕ çĕнĕ кун çывхарса килнине пĕтĕм яла систерсе умлă-хыçлă виççĕ авăтса ячĕ.*

3. Хутлă предложенири хутсăр предложенисен чиккине, предложенисенчи тĕп членсене тупăр. Хутсăр предложенисем мĕнле мелпе çыхăннине палăртăр та хутлă предложени тĕсне калăр.

*Вăл тамбура сиксе хăпарса перронти хĕвĕшекен халăх çине куç ывăтма ĕлкĕрчĕ кăна – вагон кустăрмисем шăлтăр-шăлтăр шăлтăртатса çаврăнма тытăнчĕç.*

4. Иккĕмĕш предложени миçе тĕп членлă? Анлă-и, ансăр-и? Тулли-и, тулли мар-и? Мĕншĕн?

*Çамрăк каччăн халĕ çăлтăрсен çумĕпе, уйăх çумĕпе вĕçес килетчĕ. Кăвак сĕмлĕх витĕр, тĕтрелĕх витĕр.* (В. Алентей.)

5. Иккĕмĕш предложени миçе тĕп членлă? Анлă-и, ансăр-и? Тулли-и, тулли мар-и? Мĕншĕн?

*Ун сассине илтсен Пăлаки аппан йĕрес килчĕ. Кăшкăрса, ĕсĕклесе. (В. Енĕш.)*

6. Иккĕмĕш предложени миçе тĕп членлă? Анлă-и, ансăр-и? Тулли-и, тулли мар-и? Мĕншĕн?

*Симĕс курăк çийĕн такăр сукмакпа утас килчĕ унăн халь. Васкамасăр, пĕр шухăшсăр. (В. Алентей.)*

7. Çак предложенисене синтаксис тишкерĕвĕ тăвăр:

*1) Куçа уçрăм та хамран вăтăр утăмра ларакан çамрăк хурăн тăрри сулланнине асăрхарăм.*

*2) Хĕвел анас умĕн утта капана хывса пĕтертĕмĕр.*

8. Çак текстри предложенисене тишкерĕр:

*1) Часах хĕл çывхарчĕ.*

*2) Хĕрсем улах вутти турттарма чупкаласа çӳреççĕ.*

*3) Пĕрин ашшĕнчен ыйтаççĕ, теприн ашшĕнчен.*

*4) Матрунь чĕлхи-çăварĕ çыпăçуллă, алли çăмăл.*

*5) Çур çĕр иртни пĕр-ик сехетренех тăрса çĕр улми шуратать вăл, ăна-кăна тирпейлет.*

9. Предложенири палăртнă сăмахсене мĕншĕн интонаципе уйрăмлатнине ăнлантарăр.

***Аслати умĕнхи пек,*** ял пĕр самантра шăпланса пусăрăннă. (Х. Уяр.)

10. Предложенири сӑмахсен вырӑнне улӑштарма пулать-и? Улӑштарса ҫырса кӑтартӑр. Предложенири сӑмахсен вырӑнне улӑштарнипе мӗн улшӑнать?

*а) Ҫав самантрах пӑрахут сасси сывлӑмлӑ улӑх тӑрӑх янраса кайрӗ.* (М. Трубина.)

*ӑ) Ирхи апат тӗлнелле Яриле старик утара пунеттейсене чӗнсе пычӗ.* (Х. Уяр.)

*б) Кӑнтӑрла тӗлӗнче Шуркаса хура ӑйӑр кӳлнӗ тӑрантас пырса кӗчӗ. (Х .Уяр.)*

## 1.6. Куҫару

1. Чӑвашла куҫарӑр:

*Баянист играет на баяне.*
*Охотник стреляет из ружья.*
*Острый карандаш.*
*Передать по радио.*
*Ручные часы.*
*Свидетельство о браке.*
*Мебельная фабрика.*
*Сушилка для зерна.*
*Героический поступок.*
*Играть на гармошке.*
*С легким паром.*
*Телевизионные передачи.*
*Труженики села.*
*Тумбочка для телевизора.*
*Фронтон дома.*
*Ноги затекли.*
*Зрелые мужчины.*
*Прозрачный свежий воздух.*
*Созвездие плеяды.*
*Хлеб – всему голова.*

2. Вырӑсла куҫарӑр:

*Телефонпа шӑнкӑравлама ирӗк парӑр-ха.*
*Пырӑр, эпир сире чӑтайми кӗтетпӗр.*
*Кӑтра ҫӳҫлӗ, ҫаврака питлӗ ача.*

3. Уйăх ячĕсене чăвашла калăр: *июль, октябрь, декабрь, август, ноябрь, сентябрь.*

4. Çырла ячĕсене чăвашла куçарăр: *шиповник, костяника, брусника, клюква, ежевика, голубика, рябина, вишня, крыжовник, смородина, земляника, клубника, малина.*

5. Йывăç ячĕсене чăвашла куçарăр: *ветла, береза, клен, осина, липа, ясень, ива, вяз, рябина, калина, черемуха.*

6. Пулă ячĕсене чăвашла куçарăр: *щука, карась, лещ, окунь, налим, пескарь, судак, сом.*

## III. Фольклор (халăх сăмахлăхĕ). Йăла-йĕрке

1. Атте-анне çинчен калакан пилĕк ваттисен сăмахĕпе каларăшĕ тупса çырăр.

2. Ĕç çинчен калакан пилĕк ваттисен сăмахĕпе каларăшĕ тупса çырăр.

3. Чăваш халăх юмахĕсене мĕнле ушкăнсене уйăрма пулать? Уйăрса кăтартăр, тĕслĕхсемпе çирĕплетĕр.

4. Эсир мĕнле ĕç юррисене пĕлетĕр? Ушкăнласа кăтартăр.

5. Ача-пăча сăмахлăхне мĕнле ушкăнсем çине уйăрма пулать?

6. «Алран кайми...» юрă сăмахĕсене çырса парăр.

7. Тупсăмне тупăр:

*1) Пўрт умĕнче Чиперпи ташлать.*

*2) Йăлтăр-ялтăр, шăнкăр-шăнкăр, симĕс ешĕл вĕл-вĕл-вĕл.*

*3) Хĕлĕп хĕрĕ ларма килет, шур кашмине илсе килет.*

*4) Уй тўпинче Уй пике, кĕмĕл тухья – пуçĕнче.*

*5) Кăнтăрлаччен вăкăр кўлсе каять, кăнтăрларан вара мулкачпа каять.*

8. *«Хунчăкам»* тесе кама калаççĕ?

9. Улăп халапĕсене пухса камсем пĕчĕк е пысăк хайлавсемпе тĕпчев ĕçĕсем çырнă?

10. Чăваш юмахĕсенче анлă сарăлнă, тăтăш тĕл пулакан персонажсен ячĕсене кăтартăр.

11. Чăваш халăх сăмахлăхне тĕпчекен ученăйсенчен камсене пĕлетĕр?

12. Мĕн вăл карт тата руна çырулăхĕ, вăл çырулăхран мĕн-мĕн упранса юлнă?

13. Чăваш туррисен (ыррисен) тата хаярсен ячĕсене уйрăммăн палăртса тухăр (кашни ушкăнĕпе 5-рен кая мар).

14. «Ăрăмлă сăмахлăх» тени мĕне пĕлтерет? Унпа ăçта тата хăçан усă кураççĕ?

15. «Уксах Тимур Пўлере илни çинчен» çырнă хайлавăн жанрне палăртăр. Ăна кам çырнă? Уксах Тимур Пўлере мĕне пула çĕнтернĕ?

16. Чăваш мифологийĕнчи мĕнле çилсене пĕлетĕр?

17. Мĕн вăл риторика? Риторика мелĕсем чăваш йăли-йĕркипе çыхăннă мĕнле культ тексчĕсенче палăраççĕ?

18. Улăп халапĕсен никĕсĕнче историллĕ мĕнле ăнлав никĕсленнĕ? Улăп сăнарĕн паллăрах енĕсене çырăр.

19. «Пуçана» тесе кама калаççĕ?

20. Хĕр йывăççи (символĕ) мĕн?

21. Арçын йывăççи (символĕ) мĕн?

22. Хĕрарăм йывăççи (символĕ) мĕн?

## IV. Чăваш литератури (чăваш шкулĕсем)

1. Çеçпĕл Мишши çинчен çырнă писательсене, хайлавĕсен ячĕсене çырса парăр.

2. К.В. Ивановăн «Нарспи» поэми чи малтан мĕн ятлă кĕнекере, хăçан пичетленнĕ?

3. Хайсен ачалăхĕ çинчен çырнă писательсемпе кĕнекисен ячĕсене çырса парăр.

4. Ухсай Яккăвĕ кам çинчен тĕпчев ĕçĕ çырса уйрăм кĕнеке кăларнă?

5. Ухсай Яккăвĕ К.В. Ивановăн хăш хайлавĕ тăрăх мĕн ятлă произведени çырнă?

6. И.Я. Яковлев пуçарнипе 1908 çулта мĕн ятлă кĕнеке пичетленнĕ?

7. Камсем К.В. Иванов хайлавĕ тăрăх драма çырнă? Хайлав ятне тата пичетленĕ вăхăтне кăтартăр.

8. Çак йĕркесене кам çырнă, хăш хайлавран вĕсем?

*1) Ырă чăваш тупăнчĕ,*
*Ырă ĕçе тытăнчĕ.*
*2) Сарă ыраш хумханать –*
*Чăваш чунне йăпатать.*

9. Хăвăр районта çуралса ӳснĕ çыравçăсенчен камсене пĕлетĕр? Вĕсем çырнă хайлавсене е кĕнеке ячĕсене çырса парăр.

10. Чăваш литературин паллăрах тĕпчевçисемпе критикĕсенчен камсене пĕлетĕр?

11. Чăваш Республики тулашĕнче çуралса ӳснĕ писательсен ячĕсене çырса парăр.

12. Чăваш Республикинче ытти халăх писателĕсенчен камсем пулнă?

13. Мĕн вăл публицистика? Унăн тĕллевĕсене палăртăр.

14. Хайлаври сăнарсене (героя) сăнламалли мелсене çырса парăр.

15. Мĕн вăл метафора, сăпатлантару? Ăнлантарăр, тĕслĕх илсе кăтартăр.

16. Мĕн вăл аллитераци тата ассонанс? Тĕслĕхсемпе çирĕплетĕр.

17. «Ягур» калава кам çырнă тата Ягур чăваш пулни ăçтан паллă?

18. Хветĕр Уяра ашшĕ ячĕпе мĕнле чĕнмелле? Унăн чăн хушаматне çырăр. Вăл ăçта тата хăçан çуралнă?

19. Чăваш драматургĕсенчен камсене пĕлетĕр?

20. Мĕн вăл роман? Вăл повеçрен мĕнпе уйрăлса тăрать? Хăвăр шухăшсене тĕслĕхсемпе çирĕплетĕр.

21. Чăваш литературин детективпа фантастика ăстисен хушамачĕсене тата хайлав ячĕсене асăнса тухăр.

22. «Капкăн», «Ялав», «Тăван Атăл» журналсем миçемĕш çулта, хăçан тата мĕнле ятпа тухма пуçланă?

23. «Ăмăрт кайăк» поэмăра камăн пурнăçĕпе ĕçĕ-хĕлне сăнарланă? Поэма авторĕ кам?

24. М. Фёдоровăн «Арçури» поэминчи Хĕветĕрĕн çемйи миçе çынран тăрать?

25. М. Фёдорован «Арçури» поэминчи Хĕветĕр вăрмана мĕншĕн пĕчченех тухса кайнă? Камсем тата мĕн сăлтавпа кайманнине ăнлантарăр.

26. Митта Ваçлейĕ «Виçĕ хăват» сăввинче поэзин мĕнле хăвачĕсене палăртса калать?

27. Çеçпĕл Мишши поэзийĕнчи символсен пĕлтерĕшĕсене палăртăр.

28. Тăван çĕр-шывăн аслă вăрçи çулĕсенче фашизма питлекен мĕнле кĕнекесем тата уйрăм хайлавсем пичетленнĕ?

29. А. Артемьевăн «Салампи» повеçĕнчи Таруçпа Маруç сăнарĕсен портречĕсене çырса кăтартăр.

30. А. Артемьевăн «Салампи» повеçĕнчи Салампи Алмазовпа ĕмĕрлĕхех ăçта тата мĕнле йывăç айĕнче тĕл пулать?

31. К. Турханăн «Сĕве Атăла юхса кĕрет» романĕнче миçе персонаж? Тĕп сăнарсене уйăрса кăтартăр.

32. Мĕн вăл ритм? Ăнлантарăр, тĕслĕхсемпе çирĕплетĕр.

33. Мĕн вăл пролог? Ăнлантарăр.

34. П.Н. Осиповăн паллăрах драмисен ячĕсене çырса парăр.

35. Лирика несĕлĕн жанр ячĕсене ушкăнсем çине уйăрса çырăр.

36. Чăваш литературинчи автобиографиллĕ хайлавсене асăнса тухăр, жанр тĕсĕсене палăртăр.

37. Иван Ивник «Ылхан» сăввăн содержанине мĕнле мелпе йĕркеленĕ?

38. Н.Т. Терентьев çырнă мĕнле драма хайлавĕсене пĕлетĕр?

39. *Шурă-шурă кăвакарчăн,*
*Ма вĕçетĕн пĕр-пĕччен?*
*Мĕн шыратăн ирĕн-каçăн*
*Кăвак пĕлĕт хушшинче?*

Çак çавран авторĕ кам, ăна мĕнле сăвăран илнĕ? Мĕнле сăвă виçипе çырнă? Эсир тата мĕнле сăвă виçисем пĕлетĕр?

40. Эсир Л. Агаковăн мĕнле хайлавĕсене пĕлетĕр?

41. *Халĕ çĕкленес пек вашават хĕвелĕ*
*Тухăçа илемлĕн çулăм ӳкерет.*
*Эреветлĕ шăпчăк уншăн хĕпĕртенĕ,*
*Эх, юрри-çке уççăн чӳхенсе каять.*

Çак сăвва тишкерсе тухăр, илемлĕх мелĕсене палăртăр.

42. *Шавлать, кашлать сĕм вăрман,*
*Вĕçĕ-хĕрри курăнмасть.*
*Кутсăр-пуççăр çил тухсан*
*Чăрăнассăн туйăнмасть.* (К. Иванов.)

Сăвă виçине, илемлĕх мелĕсене палăртăр.

43. Чăваш поэчĕ (Ухсай, Хусанкай, Çеçпĕл...) çуралнă, вĕреннĕ, ĕçленĕ, çӳренĕ вырăнĕсен схемăллă карттине туса парăр.

44. И.Я. Яковлевăн пархатарлă ĕçĕсене, çав ĕçсем хăш çулта пулнине çырса парăр. Вăл вĕрентсе ӳстернĕ паллă çынсене асăнăр.

45. «Чăваш халăхне» халал çырăвне И.Я. Яковлев хăçан тата хăш хулара çырнă?

46. «Эсӗ пирӗн картари ӑмӑрт кайӑк», – тесе Николай Бестужев декабрист кам ҫинчен каланӑ?

47. «Кӗнекесем маншӑн Турӑ пекехчӗ, сас паллисем вара – ылтӑнран хаклӑччӗ. Хут пӗлнине пуринчен мала хураттӑмччӗ», – тесе ҫырнӑ пӗр писатель автобиографиллӗ очеркӗнче.

Очерк авторӗ кам?

48. Митта Ваҫлейӗн «Анатри юрӑ» сӑввинче тӗл пулакан ваттисен сӑмахӗсене аса илсе ҫырӑр.

49. 100 ҫулхи историйӗнче «Хыпар» хаҫат тӗрлӗ ятпа тухса тӑнӑ. Ҫак ятсене хӑйсен историри йӗркипе ҫырса парӑр.

50. Кам тата мӗнле хайлавра асамат кӗперӗ айӗнчен тухса арҫын ача пулас тесе ӗмӗтленет?

51. Мӗн вӑл рифма? Ӑнлантарӑр, тӗслӗхсемпе ҫирӗплетӗр.

52. «Асӑнмалӑх, савӑнмалӑх» хайлавӑн жанрне палӑртӑр, авторне кӑтартӑр, кунта ҫырса кӑтартнӑ ӗҫсем хӑҫан пулса иртнине калӑр.

53. Ҫеҫпӗл Мишшин хӑш сӑввине чи нумай чӗлхене куҫарнӑ?

54. «Тавӑрпи» юмаха кам ҫырнӑ?

55. Чӑваш халӑхӗпе Украина халӑхӗ хушшинчи ҫыхӑнусене йӗркелекен ҫыравҫӑсенчен камсене пӗлетӗр?

56. Чӑваш писателӗсем ҫырнӑ юмахсен ячӗсене асӑнӑр.

57. Мӗн вӑл псевдоним? Тайӑрӑн, Ухсайӑн, Алкан, Шавлин, Илпекӗн чӑн хушамачӗсене калӑр.

58. Ҫак сӑнарсем мӗнле хайлавран, унӑн авторӗ кам: *Янтрак, Михетер, Ҫтаппан, Чинавье, Селиме, Муза.*

59. К. В. Ивановӑн «Нарспи» поэмине илемлетнӗ чӑваш художникӗсене асӑнса тухӑр.

60. Ҫак сӑмахсене кам каланӑ-ши?
*«Калаҫасса калаҫӑп эпӗ*
*Нептун ҫинче те чӑвашла».*

61. И.Е. Тӑхти хӑйӗн хӑш хайлавӗнче ӗлӗкхи чӑваш туйне питӗ ӑста ҫырса кӑтартнӑ?

62. Ҫак ҫыравҫӑсем литературӑра мӗнле псевдонимпа палӑрнӑ?
*1. Николай Васильев.*
*2. Степан Шумков.*
*3. Иван Илларионов.*
*4. Семен Фомин.*
*5. Михаил Егоров.*

63. Сӑвӑ ятне, авторне палӑртӑр, сӑвӑ виҫипе рифмине схемӑпа кӑтартӑр:
*Чӑваш чӗлхи ӑсти! Кӑварлӑ*
*Чӗрӳ сан сисӗ чӗннине.*
*Шанатӑп. Ӗмӗте усратӑп:*
*Эс килӗн, килӗн тӗнчене!*

64. Гурий Комиссаровӑн «Авлану» хайлавӗн жанрне тата унта сӑнланнӑ сӑнарсене кӑтартӑр.

65. Хайлав авторне, ятне, виҫине тата рифмине калӑр.
*Лӑпкӑ халӑх – пултӑр паттӑр.*
*Вӑл йӑваш – йӑвашлӑх ҫӗттӗр.*
*Чун-кӑвар ҫунатлӑн вӗҫтӗр*
*Кив ҫӗртен ҫӗн ҫул ҫине.*

66. К.В. Иванован пĕр хайлавĕнче ашшĕ хăйĕн хĕрне: *«Санра пархатар сахал, Эсĕ манăн хĕрĕм мар!» – тесе хурлантарать.*

Хайлав ятне тата унăн жанр тĕсне палăртăр.

67. «Таната» (Хветĕр Уяр), «Хура çăкăр» (Илпек Микулайĕ) романсенче сăнарсен характерне кăтартма авторсем сăнлав мелĕн мĕнле меслечĕпе усă курнă?

68. А.С. Артемьев истори темипе роман çырнă. Романăн 1-мĕш томĕпе (кĕнекипе) 2-мĕш томĕн (кĕнекин) ячĕсене калăр.

69. Стихван Шавли поэт «Çăпата» поэминче граждан вăрçи хыççăн 16 çул иртсен Сиваш кӳллинче паттăр салтак ӳтне тупни çинчен çырать. Çав салтак çинчен мĕн пĕлнине калăр:

1) хăш халăх çынни пулнă вăл?
2) çав салтакăн паспортри ячĕпе хушамачĕ мĕнле?
3) салтак ӳчĕ мĕншĕн çĕрмен?

70. Илпек Микулайĕн «Хура çăкăр» романĕнчи «Кантюк кĕреки» сыпăкĕнче сăнласа кăтартнă Кантюк хăнисен ячĕсене калăр.

71. Сăвă ятне, авторне çырăр. Çаврăмри сăнарлăх мелĕсене палăртăр.

*Пирĕн Раççей питĕ пысăк,*
*Ах, турă!*
*Вĕçĕ-хĕрри ун курăнмасть,*
*Тур çырлах!*
*Улпучĕсен хырăмĕсем –*
*Ах, турă!*
*Пичĕке пек тулса тăрать,*
*Тур çырлах!*

72. Сăвăн юлашки йĕркине çырса пĕтерĕр; авторне, сăвă ятне калăр; сăвă формине палăртăр:

*Тивлет те сăвап, мухтав та пехил*
*Сана, ыр ĕçре хунан таса кил!*

*Мухтав та пехил ĕмĕр-ĕмĕрне*

*...*

73. *«Ҫăлтăр витĕр ҫул курăнать, куҫҫуль витĕр ҫул курăнать...»* сăвă йĕркисем халăх сăмахлăхĕн хăш жанрĕнче тата чăваш ҫыравҫисен мĕнле хайлавĕсенче тĕл пулаҫҫĕ?

74. *«Или! Или! Лима савахвани!..»* сăвă йĕркин пĕлтерĕшне ăнлантарăр, авторне палăртăр. Сăввăн тĕп шухăшне палăртакан 3-4 тĕрев сăмахне (мотивĕсене) ҫырăр.

75. Сăвă виҫине, текстри сăнарлă пуплев элеменчĕсене палăртăр:

*Ешĕл курăк хушшинче*
*Сап-сарă чечек ӳсет,*
*Аслă Силпи ялĕнче*
*Нарспи ятлă хĕр ӳсет.*

*Пичĕ-куҫĕ пит хӳхĕм,*
*Хирти сарă чечек пек;*
*Икĕ куҫĕ хуп-хура,*
*Икĕ хура шăрҫа пек.*

76. *«Пулас тусăма»* сăвва кам ҫырнине, кĕввине кам хывнине, кам юрланине тата ăна хăш хайлавра усă курнине палăртăр:

*Ăҫта-ши эс, манăн чун-тусăм,*
*Эс кам-ши, мана шыракан?*
*Сана ман курасчĕ,*
*Часрах тĕл пуласчĕ –*
*Пăхса ҫеҫ илесчĕ куҫран.*

77. М. Федоровăн, К. Ивановăн, Н. Шупуҫҫыннин паллăрах хайлавĕсем пĕрремĕш хут миҫемĕш ҫулта, ăҫта тата мĕн ятлă кĕнекере пичетленнĕ? Кĕнеке ятне чăвашла тата вырăсла ҫырăр.

78. Тăван çĕр-шыв Аслă вăрçинче пуç хунă чăваш журналисчĕсемпе çыравçисен хушамачĕсене (10-ран кая мар) çырса парăр.

79. «Анне мана тирпейлĕ пиеленĕ» сăвăра Ухсай Яккăвĕ чăваш чĕлхин мĕнле пĕлтерĕшĕсене сăнарлă палăртать?

80. Н. И. Ашмаринăн «Кача çăви», Н. К. Янкасăн «Катя» хайлавĕсенче юрату çирĕплĕхне кам мĕнле тĕрĕслет тата хăшĕн ĕçĕ-пуçĕ тĕрĕс?

81. Çак сыпăка хăш хайлавран илнĕ? Авторĕ кам? Тата хайлавра ку сăмахсене кам кама калать?

*«Аристарх мана ыттисем пек евчĕсем ярса та, хăй çыпăçса та йăлăхтарман... Сынсем пире ялан пĕрле курма хăнăхрĕç, пулас мăшăр выранннех хума пуçларĕç. Халăх çăварĕ хапха мар, хупса хураймăн. Юлашкинчен хам та çав шухăшпа килĕшме пуçларăм. Сул çитнĕ хĕре çавăрма нумаях кирлĕ тетĕн-им? Анчах шăп çавнашкал иккĕленӳллĕ вăхăтра эс килсе тухрăн...»*

82. Мĕн вăл повесть? Хăвăр пĕлекен повеçсен ячĕсене, вĕсен авторĕсене çырса тухăр.

83. Çеçпĕл Мишшин пăхмасăр калама вĕреннĕ пĕр сăввине çырса парăр. Сăвăри илемлĕх мелĕсене палăртса тухăр.

84. И. Я. Яковлевăн «Чăваш халăхне» халалĕ 7 çаврăмран тăрать: пĕрремĕшĕпе çиччĕмĕшĕ – чĕнсе каланисем, ыттисем – уйрăм пулăмсем çинчен шухăшласа каланисем.

Мĕн-мĕн пирки тата кама чĕнсе каланă Иван Яковлев?

85. Çак сăмахсене Г. Хлебниковпа В. Чекушкин тĕпчевçĕсем А. Артемьевăн хăш хайлавĕ пирки каланă?

*«Чăн-чăн историлле романри пекех, сăнарсен йышĕ кунта пысăк: çитмĕле яхăн. Çурри ытла халăх историйĕнче палăрнă çынсем. Питех те уçăмлăн та чĕррĕн тухса тăраççĕ пирĕн ума чăваш наци культурине*

*ӳстерес тӗлӗшпе паттӑррӑн ӗҫленӗ ҫынсем: паллӑ просветитель Иван Яковлев, унӑн талантлӑ вӗренекенӗсем Константин Иванов, Федор Павлов, Николай Шупуҫҫынни, Тайӑр Тимкки, Петр Пазухин тата Чӗмпӗр шкулӗпе ҫыхӑннӑ ытти персонажсем. Кашнин сӑнсӑпачӗпе кӑмӑл уйрӑмлӑхӗсене, ӑс-хакӑлӗпе тӗнче курӑмне, хӑне евӗр чӗлхипе ӗҫӗ-хӗлне саманапа килӗшӳллӗн, историлле тӗрӗс палӑртнӑ».*

86. Ю. И. Скворцов повеҫӗсене тата унти тӗп сӑнарсен професси ячӗсене ҫырса тухӑр.

87. XX ӗмӗрӗн 20–30-мӗш ҫулӗсенче (1941-мӗш ҫулччен тата ӗмӗр вӗҫӗнче) чӑвашла тухса тӑнӑ журналсен ячӗсене (кашни тапхӑрӗпе 5-рен кая мар) тата вӗсем пичетленнӗ хуласене палӑртса тухӑр.

88. Ӗлӗкхи пурнӑҫа анлӑн кӑтартакан социаллӑпсихологиллӗ хайлавсене (50–70-мӗш ҫулсем), вӗсен авторӗсене 5-рен кая мар ҫырса тухӑр.

89. Мӗн вӑл драма? Хӑвӑр пӗлекен драма ячӗсене тата вӗсен авторӗсене (5-рен кая мар) ҫырӑр.

90. Г.В. Тал-Мӑрса «Силпи - пӑлхар пики» драмӑна кама халалланӑ? Мӗншӗн?

91. Текстри сӑнарлӑх мелӗсене тупса ӑнлантарӑр: *«Ҫак пиҫмен пашалу егерьте тӑрать, – Антонов ҫине шӑтарас пек пӑхса шухӑшларӗ Тарасов».*

92. Мӗн вӑл сюжет? Пӗр-пӗр илемлӗ хайлава тӗслӗх вырӑнне илсе сюжетӑн тӗп пайӗсене ҫырса ӑнлантарӑр.

93. Аслӑ Пӑлхар патшалӑхӗ ҫинчен ҫырнӑ чи малтанхи хайлавсенчен пӗри мӗн ятлӑ? Ӑна мӗнле чӗлхепе, хӑш ӗмӗрте е ҫулта ҫырнӑ? Авторӗ кам?

94. Н.И. Ашмаринӑн юрату хӑватне мухтакан калавӗ пур. Вӑл мӗн ятлӑ? Калаври тӗп сӑнарсен ячӗсене ҫырӑр.

95. «Ташлассине те эпӗ темиҫе тӗслӗ: чӑвашла – хыҫа силлентерсе, вырӑсла – ура пуҫне авкаласа, тутарла – пӗҫҫе тӑсса, ярӑнса ташла-ташла кӑтартрӑм та, ҫавӑнпа ман ҫине пурте пӑхаҫҫӗ», – тет хӑйӗн ҫинчен пӗр калавҫӑ. Кам вӑл? Мӗнле хайлавран? Эсир тата унӑн мӗнле пултарулӑх енӗсене палӑртнӑ пулӑттӑр?

96. *«Шур Атӑлта акӑш ярӑнать,*
*Ҫамрӑк пике евӗр курӑнать.*
*Ай-хаях, савниҫӗм, хура куҫ,*
*Ҫавӑ шурӑ акӑш эсӗ мар-ши тетӗп?»* Ҫак сӑвӑ йӗркисене кам ҫырнӑ? Сӑвӑри илемлӗх (сӑнарлӑх) мелӗсене тупса палӑртӑр.

97. С. Михайлов (Янтуш) чӑваш литературине мӗнле жанр тӗсӗсене кӗртнӗ?

98. Ҫеҫпӗл Мишши Анастасия Червякова патне миҫе ҫыру ҫырнӑ?

99. *«Тутан ашӗ,*
*Сӑвар тути,*
*Чӗрен ҫӑвӗ,*
*Тавтапуҫ!»*

Сӑвӑ ятне, авторне, жанрне тата хавхине ҫырӑр.

100. Тамара Голубева (Ю. Скворцов. «Хӗрлӗ мӑкӑнь») Вовӑна мӗнле вӗҫен кайӑк ҫӑмартине тата мӗншӗн ҫитересшӗн?

101. Мӗн вӑл ремарка?

102. П. П. Хусанкай «Тилли юррисем» поэминчи сӑвӑсене мӗнле формӑсемпе усӑ курса ҫырнӑ?

103. Ҫеҫпӗл Мишши хӑйӗн сӑввисем, ҫырӑвӗсем айне мӗнле хушма ятсем (псевдонимсем) лартнӑ?

104. А. Артемьевăн «Саламли» повеçĕ çулталăкăн хăш вăхăтне (уйăхне) сăнланипе пуçланать тата вĕçленет? Повеçри ĕç-пулăм миçе çула тăсăлать?

105. Литературăпа ӳнерте пурнăç чăнлăхне сăнланин мĕнле мелĕсене (е юхăмĕсене) пĕлетĕр?

106. Тăван çĕр-шыв аслă вăрçинче пуç хунă чăваш журналисчĕсемпе çыравçисен хушамачĕсене (10-ран кая мар) çырса парăр.

107. Г.Тал-Мăрса çырнă «Силпи – пăлхар пики» хайлаври Хун тăтăшах хурланса кама ӳпкелет?

108. «Вырăс, тутар, чăваш – пурте тăван», – тесе кам каланă? Калавĕ мĕн ятлă?

109. Кайăк е чĕр чун ячĕ хушаматлă чăваш писателĕсемпе поэчĕсене камсене пĕлетĕр?

110. Чăваш писателĕсене – пиччĕшĕпе шăллĕне е пиччĕшĕпе йăмăкне камсене пĕлетĕр?

111. Чăваш писателĕсене – арăмĕпе упăшкине – камсене пĕлетĕр?

112. Чăваш литератури мĕнле ылтăнпа пуян?

113. «Каштанка», «Муму», «Бианка» йытăсем çинчен çырнă писательсене калăр.

114. Кам пулнă вăл Чăваш Хвети?

115. «Капкăн» журнал сăпки умĕнче мĕнле паллă писатель тăнă?

116. Илле Тăхтин мĕн ятлă калавĕ ача-пăча вăййи ячĕпе пуçланать?

117. *«Эпир пулнă, пур, пулатпăр!»* – тесе кам çырнă?

118. Хăш хайлаври сăнарсен ячĕсем ***-пи*** сыпăкпа вĕçленеççĕ?

## Н.Т. ТЕРЕНТЬЕВА ХАЛАЛЛАНĂ ОЛИМПИАДА ЫЙТĂВĔСЕМ

1. Н. Терентьев драматург хăçан, ăçта çуралнă?

2. Н. Терентьев ăçта-ăçта вĕренсе пĕлӳ илнĕ?

3. Н. Терентьевăн 1-мĕш пьеси мĕн ятлă, вăл хăçан, ăçта пичетленнĕ?

4. Н. Терентьевăн малтанхи нумай актлă пьеси мĕн ятлă?

5. Н. Терентьев И.Я. Яковлевăн сăнарне, унăн ĕç-хĕлне сăнланă пьеса мĕн ятлă?

6. «Хумсем çырана çапаççĕ» драмăна миçемĕш çулта çырнă?

7. Н. Терентьевăн вăрçă çинчен çырнă мĕнле пьесисене пĕлетĕр?

8. Н. Терентьевăн мĕнле пьесисем 2-шер ятпа çӳреççĕ?

9. «Çунатлисем те çĕр çинчех» драмăри виç кĕтеслĕхе астăватăр-и?

10. «Куккук çаплах авăтать» драмăри ĕçсем ăçта тата хăçан пулса иртеççĕ? Драма тĕсне палăртăр?

11. «Хумсем çырана çапаççĕ» драмăра мĕнле паллă çынсен сăнарĕсене сăнланă?

12. «Хумсем ҫырана ҫапаҫҫӗ» драмăра И.Н. Ульянов И.Я. Яковлева мӗнле хаваслă хыпар пӗлтерет? Вăл миҫемӗш ҫулта пулнă?

13. Н. Терентьев пултарулăхне камсем тӗпчесе статьясем, кӗнекесем ҫырнă?

14. Н. Терентьев пурӗ миҫе драма (пьеса) ҫырнă?

### ЭСИР К.В. ИВАНОВĂН «НАРСПИ» ПОЭМИНЕ ПӖЛЕТӖР-И?

1. «Нарспи» поэмăра миҫе сыпăк?

2. «Нарспи ҫаврăмӗ» поэмăри миҫе катренран тăрать?

3. Силпи ялӗ мӗншӗн ҫăтмах пекех? Ăнлантарăр.

4. Нарспи мӗн ал ӗҫ тума пӗлет? Шутласа каласа тухăр.

5. Хӗр туйӗнче камсем тата мӗнле музыка инструменчӗпе каласа ташлаҫҫӗ?

6. Юмăҫ старик Сетнер амăшне ывăлӗн пуласлăхӗ пирки мӗн каласа парать?

7. Нарспи вăрмана тарса кайсан мӗнле тӗлӗк курать?

8. Тăхтаман сăн-сăпачӗпе мӗнлерех ҫын?

9. Нарспи Тăхтаманпа мӗн вăхăт пурăнать?

10. Нарспи наркăмăшлă яшка пӗҫернӗ чухне мӗнле сăмахсем калать?

11. Михетерпе карчăкӗ хӗрне каялла таврăнма ыйтсан Нарспи вӗсене мӗн калать?

12. К.В. Иванов «Нарспи» поэмăра чăваш мифологийӗнчи мӗнле ыр-хаяр сăнарӗсемпе усă курать?

## ПОЭТИКА

1. Поэтика мелĕсене кăтартăр, ăнлантарăр:

*1) Ĕнтĕ уйăх пĕччен, уйăх пĕччен –*
*Уйăх пĕччен мар, çăлтăрсем пур.*
*Ĕнтĕ эпир пĕччен, эпир пĕччен –*
*Эпир пĕччен мар, тăвансем пур.*

*2) Автанран лутра, лашаран çӳллĕ.*
*Курăкран лутра, вăрмантан вăрăм.*
*Вилме каян пуйса килнĕ, пуйма каян вилсе килнĕ тет.*

3) *Аçа çапать, шартлатать, пĕтĕм тĕнче кисренет.* (К. В. Иванов)
*Шăкăрттăм, шăкăрттăм юррăм пур, хуп хушшинче усрарăм.*
*Пĕчĕкçеççĕ пукане, пин хут кĕпе тăхăнать.*

2. Сăвă виçине, илемлĕх мелĕсене кăтартăр.

*Шавлать, кашлать сĕм вăрман,*
*Вĕçĕ-хĕрри курăнмасть.*
*Кутсăр-пуççăр çил тухсан*
*Чарăнассăн туйăнмасть.* (К. В. Иванов)

3. Чĕлхене сăнарлăхпа илемлĕх кӳрекен паллăрах мелсене асăнăр, тĕслĕхсемпе çирĕплетĕр.

4. Сăпатлантару тесе мĕне калаççĕ? Тĕслĕхсемпе çирĕплетĕр.

5. Мĕн вăл метоними? Ăнлантарăр, тĕслĕхсемпе çирĕплетĕр.

6. «Хуньăм хĕрĕ» сăмах çаврăнăшне урăх сăмахсемпе калама пулать-и? Çакăн пек ăнлава литература пĕлĕвĕнче мĕн теççĕ?

7. Халăх сăмахлăхĕнче тата илемлĕ литературăра этем пурнăçĕн пӳ-сине çут çанталăкри пулăмсемпе ытарлă кăтартнине мĕн теççĕ? Тĕслĕхсемпе çирĕплетĕр.

8. *«Пирĕн йысна пит аван:*
*Кукăр хурăн кучĕ пек».*

Çакăн йышши сăнлав мелне литература вĕрентĕвĕнче мĕн теççĕ? Ăнлантарăр, хăвăр тĕллĕн çавăн йышши тĕслĕх тупма тăрăшăр.

9. Çак сăмахсемпе усă курса сăвă çаврăмĕ йĕркелĕр: *пуш, хĕвел, чăваш, юр.*

10. Çунатлă урхамаха мĕн теççĕ?

## II. Чăваш чĕлхи (вырăс шкулĕсем)

Вырăс шкулĕн программипе ĕçлекен шкулсенче ачасем чăваш чĕлхине 1 – 9 классенче вĕренеççĕ. Программăра палăртнă тăрăх, вĕрентĕвĕн тĕп тĕллевĕ – ачасене кулленхи пурнăçра чăвашла хутшăнма вĕрентесси. Хутшăнура вара пуплевпе çыхăннă тăватă ĕç палăрать: сăмах вĕççĕн каланине илтни-ăнланни, чăвашла калаçни, çырнине вуласа ăнланни, харпăр хăй шухăшне çырса палăртни. Паллах, асăннă ĕçсем чĕлхе материалне пĕлмесĕр аталанаймаççĕ, апла пулсан ачасен чĕлхе материалне те пĕлмеллех. Олимпиадăра шăпах ĕнтĕ ачасен чĕлхе пĕлĕвне, аудировани, калаçу, вулав тата çыру хăнăхăвĕсене тĕрĕслесе чи маттуррисене палăртмалла.

### *Тĕслĕхшĕн панă аудировани тексчĕсем*

### 1. Карăк

Карăк – пирĕн тăрăхри чи пысăк кайăк. Унăн килĕ – чăтлăхлă вăтă хырлăх. Пĕтĕм ĕмĕрне çавăнта пĕр вырăнта ирттерет вăл. Пуринчен те сыхланса, пытанса пурăнать. Сайра хутра кăна, е хăрушлăхран тарса, е апат шыраса, хăй кăмăлланă вырăнтан самай инçе тухса кĕрет.

Карăк аçи тăватă килограмм ытла туртать. Хăй сухаллă. Пуçĕ тăрри, мăйĕ унăн çутă кăвакрах. Куç шăрши хĕрлĕ. Çурăмĕ хăмăр. Кăкăрĕ, çуначĕ хура, симĕсрех. Шурă, сарă йăрăмсем, пăнчăсем те пур. Кĕскен каласан, вăл питĕ хитре тумлă.

Карăк ами самай пĕчĕкрех, аçи евĕр илемлĕ мар. Вăл хăмăр кăвакрах, ула-чăлаллă.

Ытти вĕçен кайăксенчен карăк чылай пысăк. Вăйлă пулин те тăшманĕсем унăн та сахал мар. Вĕсен шутне пирĕн тăрăхри çак çăткăнсем кĕреççĕ: тилĕ, сăсар, вăрман кушакĕ, ăсан хурчки, ÿхĕ, вăрăм хÿреллĕ тăмана, хуçасăр йытăсем.

Карăка ирĕкре курма питĕ йывăр. Çĕр типсе, вăрман чакса, сайраланса пынине пула карăксен йышĕ Чăвашра та пĕчĕкленчĕ, чылай çĕрте пĕтрĕ.

## 2. Хĕвел ури пусрĕ

Илемпи Шупашкарта пурăнать. Çуллахи каникул вăхăтĕнче кашни çулах яла, кукашшĕпе кукамăшĕ патне, курма килет. Пушă вăхăтра вĕсене пулăшать. Кăçал та çаплах.

Утă çине кайрĕç пĕр кунхине. Аслисем çулаççĕ. Илемпи паккуссене салатса пырать, утă хăвăртрах типтĕр тесе тăрăшать.

Çапла ĕçлесе самаях ывăнчĕ Илемпи. Хĕвелĕ тата! Мĕншĕн çав териех çунтарать-ши тӳперен?

— Хĕвелĕн ури вăрăмланнă-ха паян, — сăмах хушрĕ çав хушăра аслашшĕ. — Илемпи çине пусма пуçларĕ авă.

— Хĕвел ури пусрĕ пуль çав, — терĕ кукамăшĕ те.

Хĕвел ури... Шухăша кайрĕ Илемпи. Мĕнле хĕвел ури пирки калаçаççĕ-ши вĕсем? Тӳпенелле тинкерчĕ хĕр ача: тап-таса вăл, пĕр пĕлĕт татки те курăнмасть. Хĕвелĕн нимĕнле ура та çук...

## 3. Сăр тăрăхĕнче

Сăр тăрăхне çитсе куртăм. Юхан шывĕ Çавалтан виçĕ-тăватă хут сарлакарах. Вăл кунсерен Атăла пин-пин кубла метр шыв хăвалать. Сăр тăрăх пысăк мар карапсем унталла-кунталла çӳреççĕ. Акă пысăк мар баржа кăкарнă буксир тăвалла шăвать. Карап-буксир çине пăхса тăма тата çӳлти пĕлĕт ӳкернĕ вĕтĕ-вĕтĕ хумлă шыв юххине сăнама питĕ аван.

Ку тăрăхри вăрман çăрарах, йывăççисем çӳллĕрех те яштакарах пек. Çаранĕ те хăйне евĕр сывлăшпа сывланăн туйăнать. Сывлăшĕ уçă, таса. Ăна ӳпке, кăкăр тулли сывласа илетĕн те, ăшри мĕн пур таса марлăх таçта кайса çухалать.

Пуç тăрринче – чĕвĕл-чĕвĕл кайăксен сасси. Сарлака çунаттисемпе вашлаттарса карăш вĕçсе иртрĕ. Аякра-аякра куккук такамăн пурнăç çулне шутлать.

Таврари вăрман илемĕпе, кайăк-кĕшĕк сассипе киленсе утнă май пĕр пысăк уçланка çитсе тухнине те сисмен. Варринче – хăмăш çыранлă çутă кӳлĕ. Вăрăм хăмăша сиркелесе çыран хĕррине çывхартăм. Çав самантра хăмăш ăшĕнчен кайăк кăвакалсем пăр! та пăр! вĕçсе тухрĕç.

## 4. Чăваш ялĕ

Чăваш ялĕсем йывăçлă, çулла аякран рашча пекех курăнаççĕ. Ĕлĕкрех ял таврашĕнче йăмра ытларах пулнă, халĕ вара ытти йывăç та йышлă – хурăн, вĕрене, ăвăс, тирек, каврăç... Ялта килсерен тенĕ пекех сад ешерет. Садсенче тĕрлĕ çимĕç йывăççи ӳсет: улмуççи, чие, хăмла çырли, хурлăхан...

Ялта пурăнакан чăваш выльăх усрама тăрăшать. Кашни çемьех ĕне, сурăх, сысна, чăх-чĕп, хур-кăвакал тытма тăрăшать. Выльăх-чĕрлĕх йышлă пулнăран чăвашсем пахча тавра карта тытаççĕ. Урам енчен çурт умĕнче килсерен тенĕ пекех палисадник.

Чăваш ялĕ ĕлĕкренпех юхан шыв хĕрринелле туртăнать. Кунта пахча çимĕç лартса ӳстерме те меллĕ, мĕншĕн тесен çĕр нӳрлĕ. Шăварас пулсан та шыв аякра мар. Юхан шыв тăрăхĕнче çĕр айĕнчен çăлкуççем тапса тăраççĕ – ĕçмелли шыв çывăх пулни те лайăх. Юхан шыв пысăках мар пулсан ăна пĕвелеме пулать. Пĕви вара пулă ĕрчетме те май парать.

Акă ман кукамайпа кукаçи те Çавал тăрăхĕнчи ялта пурăнаççĕ. Тĕлĕнмелле илемлĕ вырăнсем кунта! Йĕри-тавра вăрман ешерет. Ял пĕр енче Çавал шывĕ юхса выртать. Сывлăш уçă, таса. Çуркунне улмуççисемпе чие йывăççисем чечеке ларсан ял шап-шурă пĕркенчĕк тăхăннă евĕр туйăнать.

Эпĕ çуллахи каникулта ялта пурăнма юрататăп. Юлташсемпе эпир вăрмана çырлана, кăмпана çӳретпĕр, Çавалта пулă тытатпăр.

Çулла ялта ĕç те сахал мар. Пахча çимĕçе çумламалла, шăвармалла. Кукаçипе кукамай пенсире пулсан та выльăх-чĕрлĕх усраççĕ, çавăнпа эпĕ вĕсене утă çулма, типĕтсе кĕртме те пулăшатăп.

Мана ялта питĕ килĕшет.

## 5. Çăрттан

Çăрттан пирĕн республикăри юхан шывсемпе кӳлĕсенче мĕн ĕлĕкренпех пурăнать. Вăл хăйĕн çăткăнлăхĕпе тата пысăкăшĕпе çуйăнран кăна кăшт юлать. Ахальтен мар ăна хăш-пĕр халăх крокодилпа танлаштарать.

Пирĕн тăрăхра çăрттансем шыв варринче е юхан шыв çыранĕ хĕрринче – курăк-хăва çитĕнекен вырăнсенче пурăнаççĕ. Вĕсем хăйсем пытанса тăнă вырăнтан ытти пулăсене тапăнаççĕ. Çăрттан пурнăçĕнче çакăн пек вăрттăнлăх та пур: вĕсем ирхине тата каç пулас умĕн апатланма тухаççĕ, кăнтăрла е каçхине çывăраççĕ.

Пулăсен пурнăçне тĕпчекенсем кăтартса панă тăрăх, çăрттан ĕмĕрĕ 25-30 çул таран тăсăлать. Уйрăм çăрттансем 100 çул таран та пурăнма пултараççĕ.

Çăрттан вăрăмăшĕ метр çура яхăн пулма пултарать. Пĕр метр тăршшĕ çăрттансем пирĕн таврари кӳлĕсемпе юхан шывсенче те сахал мар тĕл пулаççĕ.

Çăрттансем пурăнакан юхан шывсемпе кӳлĕсем яланах таса. Çак пулăсем, ытти чĕр чунсем пекех, пирĕн тавралăха пуянлатаççĕ, илем кӳреççĕ.

## 6. Вăрçă вăхăтĕнче

Мускаври пушар хуралĕн ветеранĕсем вăрçă çулĕсене халĕ те ас тăваççĕ.

Аслă Отечественнăй вăрçă пуçламăшĕнче тăшман эшкерĕ пирĕн тĕп хула патнелле талпăнать. Совет салтакĕсемпе ополченецсем ăна малалла кайма чарса тăраççĕ. Зенитчиксем фашистсен самолечĕсене пере-

пере ӳкереççӗ, анчах вӗсем, каç чаршавӗпе витӗнсе, Мускав çине вӗçсе çитеççех. Хула çине пурӗ 1611 фугаслӑ бомба ӳкнӗ. Унсӑр пуçне çуртсем çине пушар кӑларакан бомба çӗр пин ытла пӑрахнӑ.

Мускаври пушар хуралӗ лайӑх ӗçленӗ. Салтаксемпе дружинниксем вутпа хӑюллӑн кӗрешнӗ, вунӑ пин ытла пушар сӳнтернӗ.

1947 çулта СССР Верховнӑй Совечӗн Президиумӗ тӗп хулана пушартан хӳтӗлес енпе тунӑ çитӗнӳсемшӗн Мускав хулинчи пушар хуралне Ленин орденӗпе наградӑланӑ.

## 7. Хӗл çумӗ

Чӳк уйӑхӗ малтанхи кунсенчех хӑй хӗл çумӗ пулнине палӑртать. Çурçӗр хӗвел анӑç енчен вӗрекен çил сивӗ илсе килет. Тӑпран çиелти сийӗ шӑнса хытать, пӗчӗк юхан шывсем пӑрпа витӗнеççӗ. Çӗр пичӗ хальлӗхе çараха, анчах вӑл кӗçех шурӑ пӗркенчӗк витӗнӗ. Пӗтӗмӗшле илсен, çут çанталӑк хӗл сиввине кӗтсе илме хатӗр.

Çулçӑллӑ вӑрман çаралнӑран пуш-пушах курӑнать. Юман çинче кӑна кушӑхнӑ çулçӑсем тӑрса юлнӑ та кӗрхи çилпе шӗпӗлтетеççӗ. Ура айӗнче вара шӑннӑ çулçӑ чӑкӑртатать. Çулçӑран тасалнӑ вӑрман темле аслӑрах пек туйӑнать. Малтан чӑтлӑх пулнӑ вырӑнсем те çуталнӑ.

Кӗрхи вӑрманта пӑши ушкӑнӗсене курма пулать. Чӳк уйӑхӗнче пӑши вӑкӑрӗсен йывӑр мӑйракисем ӳкеççӗ. Çавӑнпа та пулӗ, мӑкла пӑшисем ушкӑнсене пуçтарӑнаççӗ. Ара, йышпа кашкӑрсенчен сыхланма меллӗрех ӗнтӗ. Лешсем те çак вӑхӑтра ушкӑнсене пуçтарӑнаççӗ.

Пӑшин ӳкнӗ мӑйраки шӑшисемшӗн чӑн-чӑн апат склачӗ, ун тавра вӗсем кӗтӳпех пуçтарӑнаççӗ. Мӗн тесен те, шӑшисен те тӑшманӗсем пур – сыхӑ пулмасан часах инкеке лекетӗн. Шӑши юсран кай ура шӑтӑкне пытанса ларсан та хӑтӑлса юлаймӑн. Тыттӑрах. Çавӑншӑн шӑши юса çӗр ӗçченӗпе вӑрман ӗçченӗ ырӑ сӑмахпа çеç асӑнаççӗ: мӗн чухлӗ утӑ, çамрӑк йывӑç сыхланса юлать!

Çак вăхăтра пирĕн пата хĕл касма кайăксем вĕçсе килеççĕ. Чӳк уйăхĕнче пирĕн таврара вĕсен шучĕ чылай ӳсет: кăсăясем, уйăпсем, шăкăлчисем, тĕпеклĕ пăчăрсем, çирĕк тăррисем... Пĕр пилеш йывăççинчен теприн çине, юр айĕнчен тухса тăракан çум курăкĕсем çийĕн вĕçнине курма пулать вĕсене. Çум курăк вăрри тупаймасан йывăç папки те апата каять.

Чӳк уйăхĕнче тĕрлĕ пулă — карпсемпе карассем, çуйăнсем — юшкăн айне кĕрсе выртаççĕ те çуркуннечченех лăпланаççĕ. Теприсем хĕлле те çывăрмаççĕ. Сăмахран, шампа, уланкă, партас, кăртăш. Вĕсене вак касса тытма пулать.

Хĕл çумĕ... Хĕвел çĕр çийĕн кунран-кун сахалрах хăпарать, каçсем вăрăмланаççĕ. Йывăр хура пĕлĕтсем хĕвел çутине çĕр çине ярасшăн мар. Кун çути те темле тĕтреллĕрех пек.

Часах Хĕл мучи шурă сухалне саркаласа ярĕ...

8.

Çут çанталăк илемне такам та юрататъ, вăл такама та савăнтарать. Урама тухатăн та — куç умне авалхи йăмрасем, капăр тирексем, шурă вулăллă йăрăс хурăнсем туха-туха тăраççĕ. Садсенче ир-ирех кайăксем юрă шăрантараççĕ. Вĕсен хитре юррисем чун-чĕрене уçса яраççĕ. Пурăнас, ĕçлес кăмăл вара татах та ӳсет. Çуралнă тăван кĕтесе, пĕтĕм çĕр-шывăмăра юратса ыталас килет.

Эпĕ ача чухне сад лартса ӳстерес тесе тем чухлĕ шухăшлаттăм. Çулсеренех, вăй çитнĕ таран, пӳрт çумне хурлăхан, хăмла çырли лартса хăвараттăм. Апла пулин те манăн ĕçĕм ялан тенĕ пекех харама каятчĕ: мĕн лартнине сурăхсем, качакасем çие-çие яратчĕç.

Пĕррехинче эпир, ял çамрăкĕсем, çуралнă тăван кĕтес, тăван ялăмăр илемлĕ пулччăр тесе кашниех ял хушшине вунă йывăçран кая мар лартса хăварма сăмах патăмăр. Сăмаха çилпе вĕçтерсе ямарăмăр, çирĕп тытрăмăр. Йывăçсем часах тымар ячĕç, турат хыççăн турат хушса ешерме пуçларĕç.

Эпĕ хамăр пӳрт умне лартнă йăмрасем те часах çĕкленсе кайрĕç. Урама тухсан вĕсем мана савса пуç тайнăнах туйăнатчĕ.

«Кашни çыннăнах хăй ĕмĕрĕнче пĕр йывăçран кая мар лартса ӳстермелле», – тенĕ ваттисем. Ăслă каланă. Халĕ хам лартнă йывăççем çине пăхатăп та, чун савăнать. Вĕсем мана сиплĕ сывлăш параççĕ, хăйсен улмиçырлисемпе савăнтараççĕ. «Çамрăк чухнехи вăхăт ахаль иртмерĕ, усăллă ĕç те турăм», – тесе шухăшлатăп вара...

9.

Ванюк шăллăм – кăтра çӳçлĕ, çаврака питлĕ ача. Кулнă чух икĕ пичĕ пăт путать. Куçĕ пысăк унăн, хуп-хура, çиççе кăна тăрать.

Пĕррехинче эпир автобус çине лартăмăр та хулана çул тытрăмăр. Акă эпир Шупашкарта. Куккасем патне çитрĕмĕр.

- Кукка, сан вылямалли теттесем пур-и? – тĕпчет Ванюк.

- Темĕн чухлех: пистолет, автомат, танк, трактор, вертолет...

Хулана килнĕ кун лайăх пурăнтăмăр. Тепĕр ирхине вара...

Ванюк куçне уçнă-уçман хыпаланса:

- Кукка, сирĕн асаннĕр çук-им? – тесе ыйтрĕ.

- Пирĕн килте, Ванюк, тем те пур, асанне кăна çук, - терĕ кукка.

- Мĕнле апла? Асаннесĕр мĕнле-ха? Сĕт кам ăшăтса ĕçтерĕ мана? Юмах кам каласа парĕ тата?

Ванюк васкасах пушмак тăхăнма тытăнчĕ. «Асанне патне каятăп!» - куççуль юхтарса йĕрсе ячĕ вăл.

Кĕçех çула тухрăмăр.

Урамра хур чĕпписене килелле хăваласа пыракан асламăшне курсан йăмраллă яла ян янратса кăшкăрса ячĕ Ванюк.

– Асанне! – такăна-такăна чупрĕ ун еннелле.

– Ах, пепкем! – аллине ик еннелле сарчĕ асламăшĕ. – Ну, хулара мĕн куртăн?

Ванюк асламăшĕ çумне йăпшăнчĕ те:

– Тем те пур хулара. Эх, эсӗ кӑна ҫук унта, асанне, – терӗ.

**Аудировани хӑнӑхӑвне тӗрӗслемелли ӗҫсен тӗслӗхӗсем**

*(Текста икӗ хут вуласа памалла)*

1. Итленӗ текстӑн планне тӑвӑр, ҫырӑр.
2. Итленӗ текста ят парӑр.
3. Итленӗ текстӑн содержанине ҫывӑх ваттисен сӑмахӗсем тупӑр, ҫырӑр.
4. Итленӗ текстӑн содержанине малалла тӑсса ҫырӑр.
5. Итленӗ текстри тӗп ӗҫсем хӑш вӑхӑтра пулса иртеҫҫӗ? Эсир ҫакна мӗнле палӑртрӑр? Ҫырса ӑнлантарӑр.
6. Итленӗ текстӑн содержанийӗ тӑрӑх 10 ыйту тӑвӑр, ҫырӑр.
7. Итленӗ текстри тӗп ӗҫ (ҫын, пулӑм, чӗр чун т. ыт. те) ҫинчен Эсир тата мӗн каласа пама пултаратӑр? Ҫырса парӑр.
8. Итленӗ текстӑн содержанине вырӑсла ҫырса парӑр.
9. Итленӗ текстӑн содержанине чӑвашла ҫырса парӑр.
10. Текст содержанийӗпе килӗшӳллӗ тата килӗшӳсӗр 10 – 15 предложени хатӗрлемелле, ачасене пӗрер предложенин вуласа памалла. Предложени итленӗ текст содержанийӗпе килӗшсе тӑрать пулсан ачасем хушас паллӑ (+) лартаҫҫӗ, килӗшмест пулсан – кӑларас паллӑ (–).

**Олимпиада ӗҫӗсем**

*(Ӗҫсене вырӑсла та, чӑвашла та хушма юрать.)*

**I. Чӗлхе пӗлӗвне тӗрӗслемелли ыйтусемпе ӗҫсем**

1. Найдите лишнее слово.

| | |
|---|---|
| *чӗрӗп* | *хӑнтӑр* |
| *каюра* | *пӑрӑнтӑк* |
| *мулкач* | *арлан* |
| *кӑйкӑр* | *пӑсара* |

2. Какое слово в этом ряду лишнее?

*Ватă, усал, ухмах, çӳллĕ, çамрăк, илемлĕ, хаклă, лутра, кивĕ, ăслă.*

3. К каждому фразеологизму в русском языке подберите фразеологизм в чувашском языке, напишите рядом:

*1) и в ус не дует*
*2) мое дело сторона*
*3) дело горит в руках*
*4) держать язык за зубами*
*5) душа ушла в пятки*

4. В каком предложении сказуемое образовано деепричастием и вспомогательным глаголом?

*1) Паян çумăр вăйлах çăвать.*
*2) Паян çумăр çума пуçларĕ.*
*3) Паян çумăр çуса иртрĕ.*
*4) Паян кунта çумăр çунă курăнать.*

5. Напишите 10 глаголов, обозначающих действия, происходящие в природе осенью. Глаголы напишите в форме 3-го лица единственного числа в настоящем времени.

6. Подберите правильный аффикс и напишите вместо точек.

*1) Шухăшла... тунă ĕçшĕн кайран ан ӳкĕн.*
*2) Ĕçе тума тытăниччен малтан шухăшла... пулать.*
*3) Сăмах вăл ут мар, пĕрре каласа яр... каялла таврăраймăн.*
*4) Кĕтме пĕл.... телейлĕ.*
*5) Шыва кĕмесĕр иш... вĕренеймĕн.*
*6) Çын валли шăтăк ан чав, хăвах кĕр.... ӳкĕн.*
*7) Çухал.... укçа тупăнĕ, иртнĕ вăхăт таврăнмĕ.*
*8) Кал... маннă, илтекен манман.*

7. Какая форма глагола ***çĕнтер*** выражает Ваше желание совершить действие:

*çĕнтеретĕп;*
*çĕнтересчĕ;*
*çĕнтереетĕп;*
*çĕнтертĕм.*

8. Какие из данных местоимений сочетаются с глаголами в начальной форме:

| | |
|---|---|
| *эпĕ* | *ху* |
| *эсĕ* | *эсир* |
| *хамăр* | *эпир* |
| *вĕсем* | *вăл* |

9. Найдите неправильные словосочетания.

| | |
|---|---|
| *1) çуллахи каникулсем* | *5) кимĕ çинче ярăн* |
| *2) савăнăçлă ачасем* | *6) çĕр тенкĕсем* |
| *3) чылай йăнăшсем* | *7) чечек пуçтар* |
| *4) симĕс пăрçа* | *8) пирĕн патне* |

10. Найдите синоним.

| | |
|---|---|
| | *тукмак* |
| *Сукмак* | *шуçлак* |
| | *пăрлак* |
| | *утма çул* |
| | *кайăк хур* |

11. Из данных слов составьте предложение и напишите.

*Сивĕнсен, çити, пĕр-пĕр, выртать, шыв, хĕл, икĕ-виçĕ, карп, вырăна, каçма, кĕрсе, тарăн, градуса.*

12. Разберите слово *тăванĕсенчен* по составу. Укажите значение каждого аффикса.

13. Составьте 10 именных словосочетаний со словом *ҫăкăр.* Напишите.

14. Найдите синоним.

| | |
|---|---|
| *Улăх* | *1) уй*<br>*2) ҫырма*<br>*3) ҫаран*<br>*4) хир*<br>*5) уҫланкă* |

15. Какие слова нужны Вам для составления рассказа *«Как я починил свою одежду»?* Напишите.

16. Найдите и укажите стрелкой соответствующую часть.

| | |
|---|---|
| *Паян тумалли ӗҫе* | *ӗҫлеме те ан ман.* |
| *Телее шан,* | *ырана ан хăвар.* |
| *Тытман упан* | *сăмах нумай.* |
| *Кивӗ тус* | *ҫул та кӗске.* |
| *Ырă ҫынпа* | *ӗмӗр иртни сисӗнмест.* |
| *Ир пулать те, каҫ пулать* | *ҫул юлать.* |
| *Ура утсан* | *тирне ан сӳ.* |
| *Ухмах ҫыннăн* | *икӗ ҫӗнӗ тусран хаклă-рах.* |

17. Сколько падежей в чувашском языке?

*1) 6; 2) 7; 3) 8; 4) 9*

18. Найдите лишнее слово.

| | |
|---|---|
| *1) карăш* | *5) вӗршӗн* |
| *2) курак* | *6) шăкăлчи* |
| *3) ăсан* | *7) ҫтерлӗк* |
| *4) кăйкăр* | *8) текерлӗк* |

19. Выберите подходящий послелог.

| | |
|---|---|
| *Кун ... ҫумăр ҫурӗ.* | *1) валли* |

| | |
|---|---|
| | 2) *витĕр*<br>3) *майăн*<br>4) *каçа*<br>5) *пек*<br>6) *тăрăх* |

20. Какая форма глагола ***çурал*** подходит для следующего сообщения:

| | |
|---|---|
| *Эпĕ 1992 çулта ...* | 2) *çуралтăм*<br>3) *çуралатăп*<br>4) *çуралнă*<br>5) *çуралса*<br>6) *çуралнăччĕ* |

21. Вас пригласили в гости, но Вы не сможете идти. Какая форма глагола ***пыр*** подходит для выражения невозможности данного действия:

1) *пыратăп;*
2) *пымастăп;*
3) *пыраймастăп;*
4) *пыраятăп.*

22. Какая форма глагола ***кай*** выражает Ваше желание совершить действие:

1) *каятăп;*
2) *каяятăп;*
3) *каясчĕ;*
4) *каяймастăп.*

23. Преобразуйте повествовательное предложение в вопросительные. Напишите предложения в свободный столбик.

| | |
|---|---|
| *Саша ашшĕпе пĕрле пулла кайрĕ.* | |

24. Составьте словосочетания. Укажите стрелкой.

| | |
|---|---|
| *Пуçран* | *аптранă* |
| *Тарăннăн* | *хунанă* |
| *Нимĕнпе те* | *савăнтарман* |
| *Чĕри тапма* | *ачашланă* |
| *Ним тума* | *ашкăнман* |
| *Çулсерен* | *чарăннă* |
| *Ача чухне* | *сывлайман* |
| *Вырăнтан* | *хускалайман* |

25. В написании каких слов есть ошибка?

*Улмуççи*
*калаçça*
*йывăççем*
*вулаппăр*
*кальча*
*мунча*

26. Между какими буквами находится буква *ĕ* в чувашском алфавите?

*1) а* и *б*
*2) д* и *е*
*3) ё* и *ж*
*4) з* и *и*

27. Переведите с русского языка на чувашский. Перевод напишите рядом.

*1) Солнце село.*
*2) Кошка уселась на заборе.*
*3) Бабушка неожиданно заболела.*
*4) Снег растаял.*
*5) От дающего бери, от бьющего беги.*
*6) Знание никому не мешает.*

28. Пользуясь образцом, напишите, кто что делает.

Образец: *Автан авăтать.*

| | |
|---|---|
| *çăхан ...* | *шапа ...* |
| *чĕкеç ...* | *хур ...* |
| *куккук ...* | *лаша ...* |
| *упа ...* | *кăвакал ...* |
| *кашкăр ...* | *сысна ...* |

29. Что это? Отгадайте и напишите два слова.

*Уçă сасă манăн пулсан тăпра ăшĕнче пурăнакан чĕр чун пулатăп; уçă сасă санăн пулсан - çунат сарса çӳлте вĕçетĕп.*

30. Отгадайте загадки. Отгадки напишите рядом.

*Кашта тулли шурă чăх.*
*Урасăр – утать, алăсăр – шаккать.*
*Симĕс арчара хĕрлĕ тавар.*
*Сухаллă – ват çын мар, туратлă – йывăç мар.*
*Хура йăмăкăн юрри хитре.*

31. Допишите пословицы.

*Уй куçлă, ...*
*Ĕçрен ан хăра, ...*
*Кахалшăн çĕр кĕске, ...*
*Кушака – кулă, ...*
*Нумай та пĕтет, ...*

32. Какие термины употребляются в отношении состава чувашского слова? Подчеркните эти термины.

*Корень, суффикс, приставка, аффикс, окончание, основа.*

33. Сколько частей речи в чувашском языке?

1)10 2) 8 3) 11 4) 9

34. Какие прилагательные Вы бы использовали для описания своего друга (подруги)? Напишите.

35. Придумайте предложения со следующими устойчивыми выражениями: *арпа пуç, ыйхă чăпти, алли кĕске, икĕ питлĕ, выçă куç, пĕчĕк çын, пуш параппан çап, чĕлхӳне çырт, чуна ил, чĕр тамăк.*

Предложения напишите.

36. К данным словам подберите подходящие по смыслу деепричастия: *кĕр, çывăр, çыр, çи, итле.* Напишите глагольные сочетания и переведите их на русский язык.

37. Преобразуйте повествовательное предложение в вопросительные. Предложения запишите.

*Таня юлташĕсемпе театра кайрĕ.*

38. Из данных слов составьте предложение и напишите.

*Вăрăм, чупать, чĕрнеллĕ, вăйлă, питĕ, упа, çине, хăпарса, анать, кирлĕ, йывăç, чухне, çăмăллăнах, хăвăрт, урисемпе, те.*

39. Переведите на чувашский язык: *попрыгал, слез, похаживал, не могу читать, не хочу участвовать, закрыл, выпрыгнул, рассказывают, перешагнул, отругал.*

40. Переведите на русский язык одним словом следующие устойчивые выражения : *кукăр алă, харам пыр, чĕлхӳне çырт, чуна ил, тимĕр пăрçа, кĕççе пит, турти кĕске, сехре хăпрĕ.*

41. Разберите слово *хурăнлăхĕсенче (в березовых рощах)* по составу. Укажите значение каждого аффикса.

42. Из данных слов составьте предложение и напишите.

*Мулкач, пурăнать, тăранса, çулла, кăмпа, вăхăтĕнче, те, тăмасть, тиркесе, хăш чух, кĕре-кĕре, курăкпа, ка-*

*ять, купăста, кăмпасене, ешĕл, çарăк-кишĕр, çулçисене, çиет, пахчасене.*

43. Напишите сложноподчиненное предложение. Нарисуйте схему предложения, укажите способ соединения подчиненного предложения с главным.

44. Найдите лишнее слово

| | |
|---|---|
| *хупах* | *упа сарри* |
| *хăях* | *хăмăш* |
| *шурут* | *вĕлтрен* |
| *куршанак* | *кăрăç* |

45. Напишите на чувашском языке 10 названий рыб.

46. Напишите три предложения:
а) с обстоятельством времени;
б) с обстоятельством образа действия;
в) с обстоятельством места.

47. Напишите 5 глаголов, обозначающих действия птиц зимой. Глаголы напишите в форме 3-го лица множественного числа прошедшего очевидного времени.

48. Напишите три предложения, в которых есть определения, выраженные:
а) именем прилагательным;
б) причастием;
в) местоимением.

49. Напишите 10 старинных чувашских имен мужчин.

50. Напишите чувашские названия всех городов Чувашской Республики.

51. Напишите 10 старинных чувашских имен женщин.

52. Подберите подходящие по смыслу данным русским пословицам чувашские пословицы. Напишите.

*Хлеб – всему голова.*

*Труд человека кормит, а лень – портит.*

*Нет огня без дыма.*

*Доброе слово, что ясный денек.*

*Не хлебом единым сыт человек.*

53. Напишите глаголы, обозначающие действия людей во время уборки картофеля. Глаголы напишите в форме 3 лица множественного числа прошедшего очевидного времени.

54. Переведите на русский язык следующие устойчивые выражения: *арпа пуҫ, ыйхă ҫăпти, алли кĕске, икĕ питлĕ, выҫă куҫ, пĕчĕк ҫын, пуш параппан ҫап, ҫĕлхӳне ҫырт, чуна ил, ҫĕр тамăк.*

55. Напишите сложносочиненное предложение о себе. Нарисуйте схему предложения, укажите способ соединения простых предложений.

56. Из данных слов составьте предложение и напишите. *Ҫине, пасарнă, тăррисем, ҫĕр, йăлтăртатаççĕ, хĕрлĕ, ҫутипе, йывăç, ылтăнăн-кĕмĕлĕн, хĕвелĕн, ҫывхарнă, пăспа.*

57. Переведите на чувашский язык: *читающий мальчик, неработающий человек, решил идти, хочется спать, не могу кушать, книга для чтения, не умолкая, выпустил, переплыл, отругал.*

58. Впишите недостающее слово в пословицу.

*... пылпа ҫуран та тутлăрах.*

59. Составьте вопросы и напишите вместо точек.

– ... ... ... ?

– Питĕ тутлă пулчĕ.

– ... ... ... ?

– Пĕçеретĕп.

– ... ... ... ?

– Ытларах панулмирен пĕçеретĕп.

– ... ... ... ?

– Кăштах яратăп.

– ... ... ... ?

– Пĕр хĕрĕх минутран пиçет.

– ... ... ... ?

– Мана тата çĕр улми кукăлĕ килĕшет.

- ... ... ... ?

- Çапла, пĕçерме пĕлетĕп.

60. У Вас скоро день рождения. Какими словами Вы:

а) приглашаете друзей;
б) встречаете друзей;
в) принимаете подарки;
г) угощаете друзей;
д) провожаете друзей.

Ответы напишите на чувашском языке.

61. Составьте диалог по схеме: *вопрос – встречный вопрос с целью уточнения – уточнение – ответ.*

Диалог напишите.

62. Составьте диалог по схеме: *сообщение – вопрос с целью уточнения – уточненное сообщение и побуждение – ответ (отрицательный или положительный).*

Диалог напишите.

63. Составьте диалог по схеме: *побуждение – ответ – вопрос с целью уточнения – ответ.*

Диалог напишите.

64. Напишите текст.

*Ман юратнă кĕнеке – ...*

65. Напишите на чувашском языке текст о вреде курения.

66. Напишите на чувашском языке текст с призывом охранять родную природу.

67. Расскажите об одном из чувашских поэтов. Рассказ напишите на чувашском языке.

68. Напишите на чувашском языке текст памятки *«Правила поведения на общественном транспорте».*

69. Что бы Вы рассказали американцу о чувашах. Напишите текст.

70. Напишите на чувашском языке текст рекламы любой продукции, которая производится в Вашем городе (районе).

71. Напишите на чувашском языке рассказ о каком-нибудь знаменитом чуваше.

72. Представьте, что в Чебоксарах на железнодорожном вокзале к Вам подошел человек и спросил:

*– Каçарăр-ха, И.Я. Яковлев палăкĕ патне мĕнле çитме пулать-ши?*

Как Вы ответите? Ответ напишите.

73. Продолжите текст.

*Манăн Тăван çĕр-шыв – Чăваш çĕр-шывĕ. Чăваш çĕр-шывĕнче ...*

74. Какое блюдо Вы умеете готовить? Напишите на чувашском языке технологию приготовления.

75. Как Вы понимаете значение фразеологизма *йĕпрен пĕрене тăвать.* Ответ напишите на чувашском языке.

## V. Чӑваш литератури (вырӑс шкулӗсем)

1. Перечислите места, где обнаружены памятники древнетюркской рунической письменности и древнечувашского письма «карт».

2. Опишите, как устроено мироздание по мифологическим и этнорелигиозным представлениям древних чувашей.

3. Назовите дату открытия Симбирской чувашской школы и перечислите ее видных воспитанников – писателей.

4. Составьте краткую схему периодов жизни Михаила Сеспеля и укажите основные произведения каждого периода.

5. Перечислите чувашских писателей – участников Великой Отечественной войны.

6. Назовите основные произведения чувашско-древнетюркской литературы, Волжской Булгарии, литературы периода старой письменности.

7. Основные этапы и места жизненного пути Н.Я.Бичурина. Перечислите знакомых и близких Бичурина в среде русской интеллигенции.

8. Напишите фамилии чувашских авторов повестей и романов с указанием названий произведений.

9. Перечислите основные эпические жанры чувашского фольклора (не менее 5).

10. Перечислите наиболее известные места пребывания Н.Я. Бичурина (не менее 10).

11. Приведите отрывок из поэмы М. Федорова «Арзюри» (Леший). Где находится могила М.Ф. Федорова?

12. Что означает название стихотворения М. Сеспеля « Или! Или! Лима савахвани!»

13. Назовите писателей и поэтов, составивших ядро Симбирской литературной школы, которые внесли большой вклад в развитие чувашской литературы.

14. Как называется первый опубликованный рассказ Александра Артемьева? Кто герой?

15. Кто такие «шестидесятники» в чувашской литературе? Перечислите имена шестидесятников.

16. Перечислите чувашские романы в стихах.

17. События какого восстания и года описываются в романе Хв. Уяра «Тенета»?

18. Составьте схематический маршрут для поездки из Чебоксар на малую родину Петра Хузангая и обозначьте основные пункты проезда.

# V. ХУРАВСЕМ

## I . Чăваш чĕлхи (чăваш шкулĕсем)

### 1.1. Пĕтĕмĕшле ыйтусем

1. Тутар, пушкăрт, нухай, узбек, туркмен, азербайджан, каракалпак, алтай, кăркăс, туркка.

2. Н.И. Ашмарин. 17 томлă «Чăваш сăмахĕсен кĕнеки» 1928-1950-мĕш çулсенче пичетленнĕ.

3. Чăваш чĕлхи тĕрĕк чĕлхисен ушкăнне кĕрет.

4. Хальхи вăхăтри паллă чăваш чĕлхеçисем: И.А. Андреев, Л.П. Сергеев, А.Е. Горшков, М.И. Скворцов, В.И. Сергеев, Н.И. Егоров, Г.Е. Корнилов.

5. Николай Иванович Золотницкий – Урхас Кушкă вырăсĕ, чăваш шкулĕсен пĕрремĕш инспекторĕ, «Çулталăк кĕнеки», «Чăваш кĕнеки» кĕнекесен авторĕ, чăваш ялĕсенче шкулсем уçнă çутлăхçă. Вĕренекенĕсемпе ĕçне малалла тăсаканĕсем: И.П.Оточев, М.Д. Дмитриев, В.К. Магницкий, А.И. Добролюбов, М.Ф. Федоров, Н.Е. Ефимов, М.П. Арзамасов.

6. Чи малтан чăваш сăмахĕсене швед çынни Ф. Страленберг 1730-мĕш çулта тĕнче умне кăларнă.

7. Чăваш чĕлхин пĕрремĕш грамматики «Сочинения, принадлежащие к грамматике чувашского языка» ятлă. Ăна Хусан архиепископĕ В. Пуцек-Григорович ертсе пынипе Ермей Рожанский проповедник çырса хатĕрленĕ. Вăл 1769 çулта Питĕрте пичетленсе тухнă.

8. Чăваш чĕлхин иккĕмĕш грамматики «Начертание правил чувашского языка и словарь, составленные для духовных училищ Казанской епархии» ятлă. Ăна В. П. Вишневский протоиерей çырса хатĕрленĕ. Кĕнеке 1836 çулта Хусанта пичетленсе тухнă.

## 1.2. Фонетика. Графика. Орфографи. Лексикографи

1. Мăрье - мăрйи, пуху - пухăвĕ, туя - туйи, повесть - повеçĕ, хăю - хăйăвĕ, чие - чийи, жюри - жюрийĕ, тĕвĕ - тĕвви.

2. Çулçă, кунча, именчĕк, кĕсье, мăкăньрен, медальшĕн, писательсен, рояльпе, сĕтелри, выльăх, пылчăк, кукăльсем, тетрадьрен.

3. Чăваш сăмахĕсенчи вăрăммăн илтĕнекен хупă сасăсене çырура икĕ саспаллипе палăртаççĕ.

4. Чăваш чĕлхинче хупă сасăсем хытă уçă сасăсемпе юнашар чух хыттăн, çемçе уçă сасăсемпе юнашар тăнă чух çемçен илтĕнеççĕ.

5. Чăваш алфавитĕнче 37 сас палли: 13 уçă сас палли, 22 хупă сас палли.

6. Сăмахри уçă сасăсем хытăлăхпа çемçелĕх тĕлĕшĕнчен килĕшсе тăнине *сингармонизм (уçă сасăсен килĕшĕвĕ)* теççĕ.

7. Чăваш литература чĕлхинче сасăсене икĕ ушкăна уйăраççĕ: уçă сасăсем; хупă сасăсем.

8. Чăваш чĕлхинче икĕ уçă сасă юнашар тăма пултараймасть.

9. Хальхи чăваш чĕлхинчи ялан янăравлă хупă сасăсем: в, й, л, м, н, р.

10. Икĕ уçă сасă хушшинче тата ялан янăравлă хупă сасăпа уçă сасă хушшинче шавлă хупă сасăсем янăраса илтĕнетççĕ: *ака – ага, упа – уба, лаша – лажа, калта – калда ...*

11. Юнашар сасăсен пĕрпеклененĕвне ассимиляци теççĕ: *йывăçсем – йывăççем, вулатпăр – вулаппăр, вĕренетчĕ – вĕренеччĕ.*

12. Чăваш чĕлхинчи сасăсене тĕпчекен паллă ученайсем: В.Г. Егоров, В.И. Котлеев, П.Я. Яковлев.

13. Чăваш чĕлхинче сыпăк тĕвви уçă сасăран килет.

14. Чăваш чĕлхин пĕрремĕш орфографи словарĕн авторĕ – чăвашсен паллă чĕлхеçи В.Г. Егоров профессор.

15. Сăмах вĕçне пăхса йĕркеленĕ словаре тӳнтер словарь теççĕ.

16. Чи пирвайхи чăвашла-вырăсла словарь авторĕ – В. Пуцек-Григорович.

17. Чăваш сăмахĕнчи уçă сасăсен килĕшĕвне пăсакан аффикссем шутне çаксем кĕреççĕ: **-сем** *(лаша-сем, йывăç-сем, сынсем)*; **-иччен** *(çыр-иччен, туп-иччен, кан-иччен)*; **-скер** *(вăйлăскер, кăвак-скер, тарăн-скер)*; **-мĕш** *(саккăр-мĕш, улттă-мĕш)*; **-ĕ(-и)** *(кăмăл-ĕ, шкул-ĕ, кăмп-и)*.

18. Сас паллисен йĕркине алфавит теççĕ.

19. Фонетика тесе чĕлхе наукин сасăсем çинчен вĕрентекен пайне калаççĕ (сасăсем епле пулни, илтĕнни, сăмахри пусăм тата интонаци).

20. Лексикографи тесе чĕлхе ăслăлăхĕн словарьсем тăвас ыйтусене тĕпчекен пайне калаççĕ.

21. Графика вăл – çырулăх йĕрки, сас паллисен çырура усă куракан ытти паллисен системи, сас паллисемпе сасăсем хушшинчи çыхăну йĕрки.

22. Орфографи тесе чĕлхе ăслăлăхĕн тĕрĕс çырма вĕрентекен пайне калаççĕ.

### 1.3. Лексикологи. Фразеологи. Стилистика

1. «Мĕн акатăн, çав шăтать», «Çыншăн шăтăк ан алт, хăвах унта лекĕн», «Ут пур чух çула çӳре, аçу пур чух ĕçе вĕрен»,

«Пĕри ака-сухара, çиччĕн сĕтел хушшинче», «Çăла ан сур, хăвăнах ĕçесси килĕ», «Ватти çук – латти çук».

2. Пĕрлешӳре – вăй; Пĕччен сурать – типсе пырать, халăх сурать – кӳлĕ пулать; Пĕччен пуç пĕшкĕнет, ушкăн йыш ут утланать; Пĕччен путеке кашкăр тытнă; Пĕччен пурнăç упа пурнăçĕ пек; Ялпа, мирпе, халăхпа пĕрле; Çынсăр çын пурăнаймасть; Кӳршĕсĕр кун çук, вилсен те кӳршĕ кирлĕ; Пĕччен хулă хуçăлать, ушкăн хулла хуçма çук; Пĕр çын каять – йĕр юлать, çĕр çын çӳрет – çул пулать; Çĕр çын вĕрсен хапха тӳнет; Халăхпа вĕрсен хапха тӳнет т.ыт.те.

3. Ĕмĕр пурăн, ĕмĕр вĕрен. Чĕлхӳпе калаçма ан васка, ĕçӳпе васка. Кĕнеке те пулĕ çĕр-шыв мулĕ. Утне çитмен – туртине. Анчах вăйлă этем те хăй тĕнчине пăхăнать. Юр çинче кăмпа шырамаççĕ.

4. а) Кăмпа пултăр – кунтăкĕ тупăнĕ; ă) Сăмах çăмах мар, хыпса çăтса яраймăн; б) Шанчăклă тус – пурнăç сиплĕхĕ; в) Ăшă сăмах – çу кунĕ, сивĕ сăмах – хĕл кунĕ; г) Паттăрăн пуç выртнă, таркăнăн йĕр выртнă; д) Лаша тăват ураллă, çапах такăнать; е) Пуçтарма – çулталăк, салатма – пĕр талăк; ё) Мулкачăн хăлхи вăрăм та – хӳри кĕске.

5. а) Аннерен хакли çук; ă) Куçпа курăн, алпа тытаймăн; б) Нимсĕр нимĕр те пиçмест; в) Ĕçлемесĕр хырăм тăранмасть; г) Ӳркенмен ăста пулнă; д) Вăтанман артист пулнă; е) Чĕлхе кĕреçе мар.

6. а) Сехре хăпать – çӳç-пуç вирелле тăрать, чĕре ура тупанне çитет; ă) кайăк вĕçсе каçаймасть – пăхсан çĕлĕк ӳкет; б) хырăм хыр тăрне хăпарчĕ – арман аварать; в) пуçа каçăрт – çӳлте çӳре; г) чĕлхӳне çырт – çăварна шыв сып, шăл шуррине ан кăтарт.

7. а) Кĕлмĕçлен – хутаç çакса çӳре; ă) суй – шăннă пăр çине лартса яр, чике тăршшĕ ларт; б) хуçалан – пуç пул; в) нушалан – вутпа тăвăл витĕр тух, хĕн кур; г) усаллан – шăртна тăрат; д) вил – леш тĕнчене ăсан; е) хĕне – хăлха чикки пар.

8. а) Уй тӑмани – ухмах, тӑмсай; ӑ) шыв пулли – якӑлти; б) хӗрлӗ автан – пушар; в) вӑрӑм чӗлхе – сӳпӗлти, элекҫӗ; г) лӗпӗрти кушак – пакӑлти; д) ҫанӑ тавӑрса – тӑрӑшса; е) куҫа чарса – тӗлӗнсе; ё) чӗрне хури пысӑкӑш – пӗчӗк, сахал; ӗ) шыв сыпнӑ пек – шӑп, шарламасӑр.

9. а) Ыр вӑрлӑхран – ыр ҫимӗҫ – Мӗн акатӑн, ҫав шӑтать – Кашкӑртан кашкӑрах пулать – Амӑшне пӑх та – хӗрне ил – Ашшӗне пӑх та – ывӑлне кай; ӑ) Ҫӑхан куҫне ҫӑхан сӑхмасть – Ҫӗленпе калтан чӗлхе пӗр – Ҫӗлен ҫӗлене ҫимест; б) Вӗрмен йытӑ вӑрттӑн ҫыртать – Лӑпкӑ кӳлӗре шуйттан нумай – Кӗске пушӑ хыт ҫапать; в) Алла алӑ ҫӑвать – Эс – мана, эпӗ – сана; г) Ӑсмассерен турам лекмест – Кашни кун мӑнкун мар – Ялан чап-чап уййӑхӗ пулмасть; д) Вут сӳнсен шыв нумай – Пушар хыҫҫӑн шыв кирлӗ мар – Юр ҫинче кӑмпа шырамаҫҫӗ.

10. Точкӑсем вырӑнне скобкӑри сӑмахсенчен кирлине суйласа илсе ҫырӑр.

*Павӑл ҫамки ҫине тапса тухнӑ шултра тумламлӑ тарне шӑлса илчӗ те тенкел ҫине ларчӗ.*

11. а) Паян тумалли ӗҫе ырана ан хӑвар. ӑ) Ватӑ ҫын тӑватӑ ҫын. б) Ӗҫсӗр лариччен кӗрӗк арки йӑвала. в) Ҫын аллинчи кукӑль пысӑккӑн курӑнать. г) Ик мулкача хӑвалакан пӗрне тытайман. д) Сивӗ яшка сивӗтмест, сивӗ сӑмах сивӗтет. е) Кая юлсан каю шӑтать. ё) Ҫапа пӗлмен пушӑ хӑвна лекет. ӗ) Кашкӑртан тарнӑ упана лекнӗ.

12. а) Сехре хӑпрӗ – хӑрарӑм; ӑ) тӳрӗ пилӗк – кахал; б) хӑлхана чик – итле; в) хуп турттар – ҫывӑр; г) ик айкки те тӑвайкки – пур пӗрех; д) чике тӑршшӗ ларт – ултала; е) тӑм писмен – ухмах; ё) чӗрре кӗр – тавлаш; ӗ) кӗске турта – кутӑн; ж) тип мунча кӗрт – хӗне.

13. Упа ҫури, чана чӗппи, слон ҫури, качака путекки, шӑши ҫури, сысна ҫури.

14. Пуш параппан ҫап – арпа вӗҫтер;
Элек пар – суеҫтер;

Ыйха çап – харлаттар;
Шӳт ту – кулăш, камит ту;
Шăпи тулчĕ – шалчи тулчĕ;
Тăн пар – ăс пар;
Чьк ту – хисеп ту;
Чухăна ер – çука ер;
Чĕлхене сырт – çăварна хуп;
Харама кайрĕ – сая кайрĕ;
Куршанак çыпăçнă – пĕчĕкле ĕçлеме пуçланă;
Кĕске турталлă – хăвăрт çилленсе каякан çын;
Ик айкки те тăвайкки – уншăн пулсан пурпĕрех;
Тимĕр пăрçа – ыйтсан та япала паман, хытă çын;
Ухмаха ер – ăссăрлан;
Халтан кай – вăйран кай.

15. Патак çи – метоними;
Çĕр тĕпне анса кай – гипербола;
Нӳхреп куç – гипербола;
Чĕрне хӳри тĕшне – литота;
Пĕр чĕптĕм те – литота;
Юпа пек – танлаштару;
Нар пек – танлаштару;
Чĕкеç чĕлхеллĕ çын – метафора.

16. Катăк мар – фразеологизм.

17. 1. Суй, ултала; 2. усаллан, çиллен; 3. тăрăшса; 4. якăлти; 5. ухмах, тăмсай; 6. пĕчĕк; 7. шăп, шарламасăр; 8. мăнкăмăллан; 9. кĕлмĕçлен.

18. 1. Мĕн акатăн, çав шăтать. Кашкăртан кашкăрах пулать. Ырă вăрлăхран – ыр çимĕç. 2. Вĕрмен йытă вăрттăн çыртать. Лăпкă кӳлĕре шуйттан нумай. 3. Ăсмассерен турам лекмест. Ялан чап-чап уйăхĕ пулмасть. 4. Çăхан куçне çăхан сăхмасть. Çĕленпе калтан чĕлхе пĕр.

19. 1. Хăвăрт; 2. усаллан, çиллен; 3. тăрăшса; 4. якăлти; 5. ухмах, тăмсай; 6. пĕчĕк; 7. шăп, шарламасăр; 8. пакăлтат, сӳпĕлтет.

20. 1. Ухмах, тăмсай; 2. килĕштерейместĕ; 3. тăрăшса; 4. якăлти; 5. шухăшла; 6. нихăçан та; 7. хăрана; 8. мăнкăмăллан.

21. Ури çине ĕне пусман. – Тути çинче амăш сĕчĕ типмен. Тута сарри кайман. Сĕт шăлĕ тăкăнман. 2. Пĕр чĕлхе туп. – Пĕр шухăшлă(чĕлхеллĕ, каварлă) пул. 3. Чике тăршшĕ ларт. – Чавса таран ларт. Тăм шăхличĕ тыттарса яр. Шит тăршшĕ ларт. Туя тыттарса хăвар. 4. Хĕвел кăмака хыçĕнчен тухсан – Хура курак шуралсан. – Автан çăмарта тусан. – Сысна каштана ларсан. 5. Пиçмен пашалу – Йĕпе сăмса, çуламан (йĕпе) пăру.

22. 1. Çурт лартма йывăр мар, никĕсне хывма йывăр. 2. Ху лайăх та – çын та лайăх, ху усал та – çын та усал. 3. Çын ĕçпе ватăлмасть, хуйхăпа ватăлать. 4. Кив пӳрте пăсиччен çĕннине ларт. 5. Кĕрхи калчана кĕлете кĕртеймĕн. 6. Алă тивменни алă çул выртать. 7. Пĕр çын пăснине пин çын тӳрлетеймест теççĕ.

23. 1. Тăшман йăпăлтатса хур тăвать, тусу тавлашса ыр тăвать. 2. Усал сăмах утпа çӳрет, ырă сăмах çуран çӳрет. 4. Пуян вилет – мул юлать, ыр çын вилет – ят юлать. 5. Вут хумасăр тĕтĕм тухмасть. 6. Çĕрте малта пыр, пинте кая ан юл. 7. Ĕнсе хыçнипе ĕç пулмасть.

24. 1. Сивĕ яшка сивĕтмест, сивĕ сăмах сивĕтет. 2. Çавра çăмартан кĕтесси çук, чăн сăмахăн суйи çук. 3. Калакан маннă, илтекен манман. 4. Икĕ мулкача хăвалакан пĕрне те тытайман. 5. Кахалшăн çĕр кĕске, ĕçченшĕн кун кĕске. 6. Ӳркев ӳкерет, хастарлăх (ĕçченлĕх) хăтарать. 7. Ир тăракан çырла çинĕ, кая юлакан палан çинĕ.

25. Кунта причасти формипе тĕрĕс мар усă курнă, <u>*вĕçленес*</u> пулас причасти çумне пару падежĕн -е аффиксне тӳрех хушмалла пулнă. Тĕрĕс йĕркеленĕ предложени çакăн пек пулмалла:
*Ачасем пуçарнă ырă ĕç ăнăçлă <u>вĕçленессе</u> шанатпăр.*

26. Кулленхи калаçу стилĕпе официаллă мар хутшăнура, илемлĕх стилĕпе илемлĕ литературăра, наука стилĕпе наука ĕçĕсенче тата вĕрентӳ кĕнекисенче, ĕçлĕ стильпе официаллă

хутшăнура, публицистика стилĕпе хаçат-журналта, теле-е радиопередачăсенче усă кураççĕ.

27. 1). *Вĕрентекен учительсем* – тавтологи. Тĕрĕс вариант: *Пире вĕрентекенсем – пурте ырă кăмăллă çынсем.*

2). *Ăста* сăмах вырăнне *сăнарлă* сăмахпа усă курмалла. Тĕрĕс вариант: *Илемлĕх енчен сăнарлă ўкерчĕксем тума поэтикăллă чĕлхе мелĕсем пулăшаççĕ.*

3). *Çĕмĕрĕлчĕ* сăмах вырăнне *ванчĕ* сăмахпа усă курмалла. Тĕрĕс вариант: *Йывă кутне ўссе ларнă çамрăк кăмпа зоотехникăн сулмаклă атти айне пулса лапчăнса ванчĕ.*

4). Тĕрĕс вариант: *Чăваш литературине пирĕн патра юратса вулаççĕ.*

5). Тĕрĕс вариант: *Вулакансем статья пирки хăйсен шухăш-кăмăлне уççăн, ним пытармасăр пĕлтереççĕ.*

6). Тĕрĕс вариант: *Сан аннўне эпĕ Карл Маркс урамĕнче тĕл пултăм.*

7). Тĕрĕс вариант: *Кĕркунне пасарта арбуз сутаççĕ.*

8). Тĕрĕс вариант: *Малтанхи сăмахсене каланă чухне каччă тути чĕтренсе илчĕ.*

9). Тĕрĕс вариант: *Радио передачисене, уйрăмах чăвашлисене, ман анне юратса итлет.*

10). Тĕрĕс вариант: *Колхоз председателĕ пирĕн шкула телевизор парнелерĕ.*

11). Тĕрĕс вариант: *Телевидени передачисене ачасем куллен савăнса пăхаççĕ.*

12). Тĕрĕс вариант: *Эпĕ аннене 60 çул тултарнă ятпа ăшă тутăр парнелерĕм.*

13). Тĕрĕс вариант: *Ман санран ыйтса пĕлмелли пур.*

14). Тĕрĕс вариант: *Мана ун чухне редколлеги членне суйланăччĕ. Кайран редактора лартрĕç.*

28. Илемлĕ – хитре, чипер, селĕм, шеп, хӳхĕм, ĕлккен;

Пысăк – шултра, мăн(ă), аслă;

Шавла – кашла, кĕрле, янăра, çуйăх, кăшкăраш;

Ăру – ăрат, йăх, несĕл, тăхăм, тавраш;

Лаша – ут, урхамах, çăрха;

Çирĕп – тĕреклĕ, вăйлă;

Ерипен – хуллен, вăраххăн;

Кахал – наян, юлхав, ӳркенчĕк, лӳппер, ханттар, услап, тӳр пилĕк.

29. Ăраскал – телей, шăпа;

Ăсчах – ăста çын, ăслă çын, ученăй;

Пайта – усă, тупăш;

Юлан ут – утланса çӳремелли лаша.

30. 1) *Синоним* тесе тĕрлĕрен илтĕнекен, анчах çывăх е пĕр тан ăнлава пĕлтерекен сăмахсене калаççĕ. Вĕсем пĕр япалана (лаша, ут), пĕр пахалăха (çирĕп, тĕреклĕ), пĕр ĕçе (пер, ывăт), кăмăл-туйăма (савăнăçлă, хаваслă) пĕлтереççĕ.

2) *Антонимсем* тесе пĕр пуплев пайне кĕрекен хирĕçле пĕлтерĕшлĕ сăмахсене калаççĕ: тус – тăшман.

3) *Омонимсем* тесе пĕр пек илтĕнекен, анчах тĕрлĕ пĕлтерĕшлĕ сăмахсене калаççĕ: карас – пулă; карас – пыл хуракан вырăн.

31. Пахча çимĕç: помидор, кишĕр;

Тыр-пул: кукуруза, ыраш;

Техника: комбайн, плуг, сеялка;

Чĕлхе: орфографи;

Искусство: кино, живопись, музыка;

Ономастика: Иван Мучи, Сантăр, Çеçпĕл Мишши;

Топонимика: Атăл, Шупашкар;

Мифологи: пихампар, киремет;

Литература: поэма, сонет, метафора, сăпатлантару, тĕрленчĕк, синекдоха, ритм.

32. 1) Кăмпа карти, кил карти, хур карти, уйăх карти, ташă карти, вăйă карти, утă карти, чĕре карти.

2) Çĕр шапи, çĕр çырли, çĕр мулкачи, çĕр улми.

3) Чĕр тамăк, чĕр чун, чĕр тавар, чĕр кĕмĕл, чĕр тамăк.

33. Пуртă, сава, вăрăм сава, пăчкă, ийĕ, мăлатук.

34. Наука лексики, официаллă лексика.

35. Сайра усă куракан сăмахсем шутне архаизмсемпе историзмсем кĕреççĕ. Вĕсем кивелнĕ сăмахсем шутланаççĕ.

36. Çĕнĕ сăмахсене неологизмсем теççĕ: суйлавçă, хаçатçă.

37. Пĕр сăмахпах пĕтĕм япалине те, унăн пайне те пĕлтернине метоними теççĕ.

38. Ятарлă лексика шутне терминсем тата профессионализмсем кĕреççĕ.

39. Текста ăслăлăх стилĕпе çырнă. Унăн теми – *хытăлăхпа çемçелĕх паллисене çырасси.*

40. Кĕсел тырри – сĕлĕ.

41. Кĕскен çапла çырмалла: авăрлă мăн курка – алтăр; типĕ курăк – утă.

42. Кăрлач, нарăс, пуш, ака, çу, çĕртме, утă, çурла, авăн, юпа, чӳк, раштав.

43. Çăпата: çапă, тапă, пăта, апат, çăт, çап, пат, та, атă, атăç, тапăç, тапаç, пăт, пата, çат.

44. Ă – сан.

45. Ку – рак.

46. Йывăрăш виçисем:
кĕрепенке – 409 гр.
кĕренке – 380 гр.
пăт – 16 кг.

47. Лексикологи вăл – чĕлхе ăслăлăхĕн сăмахсене, вĕсен пĕлтерĕш ушкăнĕсене тĕпчесе вĕрентекен пайĕ.

## 1.4. Морфологи. Сăмах пулăвĕ

1. Тулли пĕлтерĕшлĕ пуплев пайĕсене кĕрекен сăмахсем япаласене, вĕсен паллисене, ĕç-хĕле, унăн паллисене пĕлтереççĕ. Вĕсем тĕрлĕ формăсенче пулма пултараççĕ, предложенире уйрăм член пулаççĕ. Чăваш чĕлхинче пурĕ 11 пуплев пайĕ. Вĕсенчен 7-шĕ тулли пĕлтерĕшлисем: япала ячĕ, паллă ячĕ, глагол, хисеп ячĕ, местоимени, наречи, евĕрлев сăмахĕ.

Пулăшу пĕлтерĕшлĕ пуплев пайĕсем виççĕ: союз, хыç сăмах, татăк. Вĕсем улшăнмаççĕ, предложенире уйрăм член пулмаççĕ, сăмахсене е предложенисене пĕр-пĕринпе çыхăнма пулăшаççĕ е пуплев сыпăкĕн пĕлтерĕш сĕмне улăштараççĕ.

2. Чăваш чĕлхинче пурĕ 11 пуплев пайĕ. Пуплев пайĕсен ячĕсем: япала ячĕ, паллă ячĕ, глагол, хисеп ячĕ, местоимени, наречи, евĕрлев сăмахĕ, союз, хыç сăмах, татăк, междомети.

3. Алюмини, алюминин, алюминие, алюминире, алюминирен, алюминипе, алюминисĕр, алюминишĕн.

4. *Кăранташăмсемпе* – яп. ячĕ, сăмах тĕпĕ – кăранташ, пайăр мар ят, 1-мĕш сăпатра, сăпачĕ пĕррелĕх хисепĕнче, япала ячĕ нумайлăх хисепĕнче, пĕрлелĕх падежĕнче.

